24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
25
ЫТЛАРИКУН
278 (5993) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Çулпуç кăтартăвĕсене большевикла тимлĕхпе пурнăçа кĕртсе пырар

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн IX-мĕш пленумĕ, республикăри активăн, Шупашкар хулинчи тата районсенчи партактивсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Обком пленумĕ тата актив пухăвĕсем Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмаха пурнăçа кĕртесси çинчен сÿтсе-яврĕç, Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçламалли практикăллă мероприятисене палăртрĕç.

Сталин юлташ панă кăтартусем — мĕнпур парторганизацисен, çавăн пекех советсемпе хуçалăх организацийĕсен малашнехи ĕçĕн программи пулса тăраççĕ.

Сталин юлташ татах тепĕр хут пире çакна астутарчĕ: вăрçă тăватă уйăх хушши пынă вăхăтра çĕршыв умĕнчи «хăрушлăх вăйсăрланмарĕ кăна мар, пĕтĕмпех урăхла, вăл татах та ытларах вăйланчĕ» (**Сталин**). Çынсем тата хĕçпăшал тĕлĕшпе тăшман пысăк çухатусем тÿсет пулсан та, вăл пирĕн çĕршывăн пысăк вырăн йышăнса тăракан центрĕсем патнелле пыма, çĕршыв столицине — Мускава пырса кĕме тăрмашать. Пирĕн умра тăракан пысăк хăрушлăха асра тытса, парти, совет тата хуçалăх организацийĕсен, мĕнпур совет халăхĕн тăшмана çĕнтерме мĕнпур вăйсене мобилизацилес пулать.

Отечественнăй асла вăрçă кунĕсенче, Сталин юлташăн кăтартăвĕсене, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн, Совет правительствин постановленийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Чăваш республикинчи большевиксем, вĕсемпе пĕрле мĕнпур ĕçсыннисем, ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе, промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те пысăк çитĕнÿсем турĕç. Промышленность предприятийĕсем чылайĕшĕ паянхи куна çулталăкри производствăллă плансене тултарчĕç, чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç те государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене тултарчĕç. Двухсотниксен — вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен движенийĕ анлăн сарăлчĕ. Рабочисемпе колхозниксем нормăсене икшер-виçшер хут тултарса ĕçлеççĕ. Куславкка комбинатĕнчи пĕр цехри слесарь Подольский юлташ нормăна 500—600 процент таран тултарса ĕçлет.

Хăйсен пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекенсен йышĕ ÿссех пырать. Çулпуç чĕнĕвĕ çине колхозниксем те ялхуçалăх ĕçĕсене кунĕн-çĕрĕн туса пынипе ответлеççĕ, хăвăртрах авăн çапса пĕтерме, государство умĕнчи парăмсене парса татма тăрăшаççĕ. Пирĕн халăх çĕршыв оборонин фондне тăвать. Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтир парать, хамăрăн çарпа флота пулăшас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет.

Çакăнпа пĕрлех Обком пленумĕнче тата актив пухăвĕсенче тухса калакансем пирĕн ĕçри çитменлĕхсене кăтартрĕç. Пирĕн республикăри уйрăм предприятисен руководителĕсем хăйсем ертсе пыракан заводăн, фабрикăн, промысла артелĕн ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетессине вăраххăн туса пыраççĕ. Уйрăмах Вырăнти промышленность Халăх Комиссариатне пăхăнса тăракан хăшпĕр предприятисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çĕнĕ йышши продуктсем тăвас ĕçе йĕркелесе ярасси кирлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пымасть. Уйрăм предприятисен ĕçĕнче йĕркесĕрлĕхсем те пур-ха, оборудованисемпе тата мĕнпур ресурссемпе кирлĕ таран усă курмаççĕ. Шупашкарти «Красный молот» артелĕн тимĕрçĕ ĕçне тума темиçе вучах пулсан, ĕçлемелли хатĕрсем — мăлатуксемпе хĕскĕчсем юлашки вăхăтченех питĕ сахал пулнă. Çакă вара, паллах, артель руководителĕ оборудованипе туллин усă курассине йĕркелесе яманнинчен килнĕ. Кун пек çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермелле.

Промышленноçа ертсе пырас ĕçри работниксен тата предприятисенче ĕçлекенсен пурин те фронта кирлисене йăлтах васкавлăн туса кăларса пыма тăрăшмалла. Промышленность наркомачĕсен, промысла союзĕсен, предприятисен тата артельсен руководителĕсем, предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем хăйсен ĕçĕнче çар заказĕсене хăвăртрах пурнăçа кĕртесси çине тата çар валли кирлĕ çĕнĕ йышши продуктсене туса кăларассине хăвăртрах йĕркелесе ярасси çине пуринчен ытларах çавăрăнса пăхмалла. Кашни предприяти, кашни артель производствăллă плана тултармалла тата ытлашшипех тултарса ĕçлемелле.

Вăрçă пынă условисенче вырăнти промышленность республикăн мĕнпур чĕртавар ресурсĕсемпе туллин усă курни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен вырăнти промышленноçа ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатас пулать, райпромкомбинатсене, предприятисене, промысла артелĕсене ĕçе ăста пĕлекен кадрсемпе çирĕплетмелле, вĕсене вăхăтра чĕртавар, ĕç вăйĕ парса тăрас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла, вĕсене ĕçе тĕрĕс организацилеме тата ĕçшĕн тĕрĕс тÿлес йĕрке тума пулăшни кирлĕ. Çавăнпа пĕрлех вырăнти промышленноçăн предприятийĕсенче тата промысла коопераци артелĕсенче ĕçлекенсем хушшинче политикăллă массăллă ĕçе куллен туса пымалла.

Чугунçул транспорчĕ енĕпе поездсем хĕллехи условисенче кирек мĕнле çанталăкра та яланах тата пĕр чăрмавсăр çÿрессине, топливăна перекетлессине, двухсотниксен-трехсотниксен движенине вăйлатассине тата ĕçĕн лунинла методĕсемпе усă курассине ĕçе кĕртмелле. Чугунçул çинчи парторганизацисемпе руководительсен чи кирлĕ те пысăк задачи Оборонăн Государственнăй Комитечĕ йышăннă постановленисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртесси пулать. Партипе советсен территориальнăй организацийĕсен чугунçул транспорчĕ умне вăрçă вăхăтĕнчи условисенче лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме чугунçул çинчи работниксене куллен пулăшса пырас пулать.

Вăрман ĕçне туса тăракан, йывăç хатĕрлекен организацисен, партипе совет органĕсен çĕршыва питех те кирлĕ йывăç хатĕрлесе памалли заданисене пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртсе пымалла, механизациленĕ çулйĕрсемпе тата рационализациленĕ инструментсемпе пурнипе те туллин усă курасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Çавăнпа пĕрлех партипе совет органĕсен тата вăрман хатĕрлекен организацисен республикăри хуласем, промышленность предприятийĕсем, шкулсем, больницăсем тата культурăпа çутĕç учрежденисем валли кирлĕ вутта хĕллехи вăхăтра хатĕрлесе тата турттарса хурас пулать. Çапла вара, хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлес ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси хуçалăхлă-политикăллă пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Ялхуçалăх ĕçĕсем кая юлса пынине пĕтерес пулать. Колхозниксене, район центрĕсенчи ĕç резервĕсене пĕтĕмпех декабрĕн 10-мĕшчен авăн çапса пĕтерме, тырпул хатĕрлес плана çак кунсенчех тултарса çитерме мобилизацилемелле. Çĕрĕç органĕсем, партипе советсен хăшпĕр организацийĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла. Пирĕн республикăн колхозĕсем фронтрах çĕршыва валли ытларах та ытларах паха аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем парса тăччăр. Пуринчен ытла лашасем ĕрчетесси çине вăйлăн çавăрăнса пăхмалла.

Финанс органĕсен тата суту-илÿ организацийĕсен те хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе çитерес пулать. Финанс органĕсен, ВКП(б) райкомĕсемпе райсовт исполкомĕсен тăваттăмĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемелле. Райсоюзсемпе торгсен ĕçне лайăхлатмалла, уйрăмах пахча-çимĕç тата çĕрулми хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçе вăйлатас пулать.

Обком пленумĕ тата партактив пухăвĕсем йышăннă постановленисенче палăртнă практикăллă ĕçсене хăвăрт пурнăçа кĕртсе, эпир халăхи вăхăтра тăван çĕршыв ыйтнисене тивĕçтерес ĕçе ăнăçлăн туса пырăпăр.

Сталин юлташ Октябрь уявĕн кунĕсенче каланă сăмахсем совет патриочĕсене фронтра тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçма, тылра хастаррăн ĕçлеме хавхалантарчĕç, производствăри çĕнĕ çĕкленĕве пуçарчĕç. Большевиксен партин членĕсен производствăри çак пысăк çĕкленĕве малалла аталантарса пымалла. Коммунистсен, вĕсемпе пĕрле беспартийнăй большевиксен те, Сталин юлташ чĕнĕвне кашни ĕçсыннин патне çитерме тăрăшмалла, ĕçре пример кăтартмалла.

Сталин юлташ хуçалăх ĕçĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçсемпе çыхăнтарса туса пымаллине яланах астутарса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнче партиллĕ-политикăллă ĕçе нихăçанхинчен вăйлăрах туса пырас пулать. Парти организацийĕсен массăсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, беспартийнăй активпа кунсеренех ĕçлес пулать, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене, илсе парти ретне ÿстермелле. Халĕ пирĕн хамăра шеллемесĕр, çине тăрса, паттăррăн ĕçлемелле, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота ĕçлĕ тата активлă пулăшу парса пырас пулать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

ССР Союзĕнчи авланман, пĕччен пурăнакан тата ачасăр граждăнсем çине налог хурасси çинчен

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1-мĕш статья. 1941 çулти октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, ССР Союзĕнчи пĕччен пурăнакан тата ачасăр граждăнсем çине налог хумалла тăвас.

2-мĕш статья. Пĕччен пурăнакан тата çемьеллĕ граждăнсем çине—20 çултан иртнĕ тата 50 çула çитеймен арçынсем çине, 20 çултан иртнĕ тата 45 çула çитеймен хĕрарăмсем çине, вĕсен ачасем çук пулсан, налог хураççĕ.

3-мĕш статья. Налог тÿлессинчен çаксене хăтараççĕ:

а) çар çыннисемпе вĕсен арăмĕсене;

б) асла шкулсенче тата вăтам шкулсенче вĕренекенсене—25 çула çитеймен арçынсене тата 23 çула çитеймен хĕрарăмсене;

в) пенсионерсене;

г) врачсен комиссийĕ палăртнă тăрăх сывлăха пула ача çуратма пултарайман мăшăр пулнă çемьери арçынсемпе хĕрарăмсене.

4-мĕш. статья. Рабочисемпе служащисем çине тата подоходнăй налог хурас тĕлĕшпе вĕсемпе танлаштарнă ытти граждăнсем çине çак налога вĕсен иртнĕ уйăхри ĕçукçине кура предприятисем, учрежденисемпе организацисем шутласа хураççĕ тата иртсе пыракан уйăхăн малтанхи çур пайĕнчи ĕçукçинчен çак хисеппе тытса юлаççĕ:

а) уйăхри ĕçукçи 150 тенкĕрен каярах пулсан, уйăхра 5 тенкĕ чухлĕ;

б) уйăхри ĕçукçи 150 тенкĕрен ытларах пулсан, ĕçукçин 5 проценчĕ чухлĕ.

5-мĕш статья. Литераторсем тата искусство работникĕсем çине налога предприятисем, учрежденисемпе организацисем вĕсен ĕçукçин 5 проценчĕ чухлĕ шутласа хураççĕ тата ĕçукçине панă чухне кашни хутрах тытса юлаççĕ.

6-мĕш статья. Çак Указра 4-мĕшпе 5-мĕш статьясенче кăтартман ытти граждăнсенчен налог çакăн чухлĕ илеççĕ:

а) подоходнăй налог тÿлекен граждăнсенчен—иртсе пыракан çулта подоходнăй налог хунă тупăшăн 5 проценчĕ чухлĕ;

б) колхозниксен хуçалăхĕнче тата единоличник-хресченсен хуçалăхĕнче тăракан граждăнсенчен — çулталăкра 100 тенкĕ;

в) подоходнăй налог тÿлемен граждăнсенчен тата ялхуçалăх налогĕ тÿлекен хуçалăхсенче тăман граждăнсенчен—çулталăкра 60 тенкĕ.

7-мĕш статья. Кĕрешсе ĕçлесе тата литературăпа искусствăра ĕçлесе илнисĕр пуçне подоходнăй налог хумалли ытти тупăшсем илекен граждăнсем çине, вĕсем хăйсем ĕçленĕ çĕртп налог тÿленине пăхмасăр, çак Указри 6-мĕш статья тăрăх налог хураççĕ.

8-мĕш статья. 6-мĕш статья тăрăх налог хурассине налог тÿлекен çын пурăннă районри, хулари финанс отделĕсем туса ирттереççĕ, налог тÿлекен çын подоходнăй налога урăх районра (хулара) тÿлет пулсан, ун çине çак налога вăл подоходнăй налог тÿленĕ вырăнта хураççĕ.

9-мĕш статья. 6-мĕш статьяра кăтартнă тăрăх налог тÿлекенсем хăйсен налогне пĕр пек пайсемпе 4 срокра тÿлеççĕ: апрелĕн 1-мĕш тĕлне, июнĕн 1-мĕш тĕлне, октябрĕн 1-мĕш тĕлне тата декабрĕн 15-мĕш тĕлне.

10-мĕш статья. 1941 çулшăн хунă налога 1941 çулти декабрĕн 1-мĕш тĕлне тÿлемелле тăвас.

11-мĕш статья. Налог тÿлемелле тунă граждăнсен ача çуралсан, вĕсем, ача çуралнă хыççăнхи тепĕр срокран пуçласа, налог тÿлеме пăрахаççĕ.

12-мĕш статья. Çак Указа пурнăçа кĕртмелли инструкцие ССР Союзĕн Наркомфинĕ кăларать.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 21-мĕш.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Тăшманăн войскисене пырса çапни

Хĕрлĕ Çар войскисем, Кăнтăр енĕсенчен пĕринче Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерех контрнаступлени тунă хыççăн, 1941 çулти ноябрĕн 20—23-мĕшсем хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен 49-мĕш горно-стрелковăй корпусне, СС «Викинг» дивизине тата 16-мĕш танковăй дивизине çапса çĕмĕрнĕ. Çав çапăçусенче пирĕн войскăсем 111 оруди, 55 танк, 83 пулемет, 36 миномет, 365 автомашина, 115 мотоцикл тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противникăн 7.000 çын ытла вилсе юлнă.

Çав çапăçусенчех, çав вăхăт хушшинче нимĕçсен 45 самолетне персе антарнă. Ноябрĕн 23-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем, противника хăваласа пырса, малтанхи позицисенчен 60 километр малалла кайнă.

Совет Информаци Бюровĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ

ВĂРМАР. Районра воскресник питĕ ăнăçлă иртнĕ. Кунти çамрăксемпе ĕççыннисем воскреснике активлăн хутшăннă. Районра пĕтĕмпе воскреснике тухса 7.379 çын ĕçленĕ, комсомолецсем 612 çын пулнă.

Воскресникре ĕçленисен ĕçне укçапа шутласан, вăл мĕнпурĕ 27.092 тенкĕ пулать. Çамрăксемпе ĕççыннисем тĕрлĕ ĕçре пулнă. Чугунçул çинче 25 çын 125 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Авăн çапнă çĕрте 3115 çын пулнă.

Уйрăмăнах Тегеш колхозĕнче воскресник аван иртнĕ. Унта авăн çапнă çĕрте 120 çын ĕçленĕ, вĕсем 168 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ Анисимова юлташ воскреснике организацилес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Воскреснике комсомолецсемпе çамрăксемсĕр пуçне ытти ĕççыннисем те активлăн хутшăннă. Мĕнпурĕ районĕпе воскреснике 15 пин çын тухнă. Вĕсем 71.092 тенкĕ укçа, 6.970 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ ноябрĕн 23-мĕшĕнче комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне ирттерме йышăннине районти комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем пысăк хастарлăхпа кĕтсе илчĕç. Воскресникре ĕçлеме районĕпе 4.062 çын тухнă, вĕсенчен 1.082 çын авăн çапнă.

Шатракассинчи вăтам шкулти 12 учитель колхозра авăн çапнă. Мĕнпурĕ 779 килограмм ыраш çапса илсе, 11 ĕçкунĕ ытларах тунă. «Дружба» колхозра çав кун 89 çын ĕçленĕ. Вĕсем 82,40 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Т. ЧУРМАКОВА.

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО. Туллимар даннăйсем тăрăх, воскресникре 5.230 çын, вĕсенчен 489 комсомолец пулнă. Вĕсем 5.139 ĕçкунĕлĕх ĕçленĕ.

„Комсомол Чувашии“ бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

КУКЕÇ. Кивçурткассинчи пуçламĕш шкулта вĕренекенсен пухăвĕ пулчĕ. Пухура Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сÿтсе-яврăмăр.

Унтан ачасем пурте пĕр саслăн пулса «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пама йышăнчĕç. Халĕ эпир 65 тенкĕ пухрăмăр та ĕнтĕ. Укçа-тенкĕ пухасси сарăлсах пырать.

Вĕренекенсем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Куснарти пуçламĕш шкулта вĕренекенсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Учитель Н. ФЕДОРОВ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Октябрьски районри «Большевик» промартель çамрăкĕсем чĕнсе каланине районра пур çĕрте те пысăк хавхаланупа сÿтсе-яваççĕ. 765 тенкĕ укçа пухнă. Чурачăк шкулĕнче вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем пĕр кун хушшинчех 240 тенкĕ пухнă. Çак ĕçре Чурачăк вăтам шкулĕнчи учительсен коллективĕ пысăк активлăх кăтартса панă.

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Марков юлташ бронепоезд тунă çĕре 100 тенкĕ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Мышкин юлташ 50 тенкĕ, Махмутова юлташ 50 тенкĕ, Андреев юлташ 35 тенкĕ панă.

Чăваш комсомолĕн ячĕпе бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ĕç районра малалла сарăлса пырать.

П. АРХИПОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă. Фронтăн Клин, Волоколамск, Тула тата Ростов (Дон çинчи Ростов) участокĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ.

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсенне 5 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

* * *

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсенне 28 танк, 12 бронемашина, 896 автомашина, 14 штаб автобусне, горючи тултарнă 6 автоцистернăна, снарядсем тиенĕ 568 лава, 32 оруди пĕтерсе тăкнă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Шепитов юлташăн чаçĕнчи боецсем ноябрĕн 20-мĕшĕнче нимĕçсенне 60 автомашина, 130 мотоцикл, 11 оруди, 13 пулемет пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пехотине батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кĕçĕн политрук Бирмин танкĕ сыхласа тăракан участока противник 40 танк кĕртсе янă. Совет танкисчĕсен паттăр экипажĕ тăшмана тăвăллă вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ. Нимĕçсен 5 танкне персе аркатса, тăшманăн колоннине пăтраштарса янă хыççăн, Совет танкĕ боеприпассем пĕтĕмпех пĕтсен тин çапăçуран тухнă, совет танкне нимĕнле сиен те пулман.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсем фашистсене сисĕнмеллех пыра-пыра çапаççĕ.

Ноябрĕн 11-мĕшпе 15-мĕш кунĕсем хушшинче партизансен темиçе труппи, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен боеприпассемпе продовольстви тиенĕ тата пехота ларса пыракан 10 грузовой автомашинине, офицерсем ларса пыракан 2 çăмăл машинине, тăшманăн орудийĕсене тата утă лавĕсене пĕтерсе тăкнă.

Партизансем чугунçул линине тата икĕ кĕпере аркатнă, зарядно-акумуляторнăй станцине стройран кăларнă тата çыхăну линийĕн шултра кабелĕсене 21 вырăнта пăснă, çак вăхăт хушшинчех партизансем тăшманăн 112 салтакне тата 5 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Д. юлташ ертсе пыракан отряд противникăнне 3 бомбардировщик пĕтерсе тăкнă. С. юлташăн отрячĕ Германи самолетне-истребительне çунтарса янă. Противник Ленинград фрончĕ патне хĕçпăшал тата войскăсем турттарса пыракан çул çинче Димитрий юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ çичĕ кун хушшинче нимĕçсенне 8 грузовой машина, икĕ çăмăл машина тата 2 мотоцикл пĕтерсе тăкнă. Çав çичĕ кун хушшинчех партизансем нимĕçсен 50 салтакне, 12 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, фашистсенчен 2 станковăй пулемет тата 7 автомат тытса илнĕ. Партизансен отрячĕ ăçта вырнаçнине шыраса тупса, нимĕçсем партизансене хирĕç карательнăй экспедици янă. Партизансем, тăшмана хирĕç хăйсем малтан атака пуçласа, фашистсене салатса янă.

Германи командованийĕ партизансене хирĕç кĕрешме ятарласа янă нимĕç офицерне—обер-лейтенанта партизансен отрячĕн комиссарĕ П. юлташ хăй персе вĕлернĕ.

* * *

Мускав облаçĕн хăйсем тытса илнĕ ялĕсенче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем тискеррĕн хăртаççĕ, çынсене асаплантараççĕ, ирĕксĕрлеççĕ. Горбово ялĕнче гитлеровецсем пĕтĕм халăха чиркĕве хăваласа пухнă та, персе пăрахассипе хăратса, хресченсене вĕсем апат-çимĕçсемпе пурлăхсене ăçта пытарни çинчен пĕлтерме хушнă. Фашистла бандитсем 65 çулхи карчăксене Синицинăпа Морозовăна çак чиркÿрех прикладсемпе хĕнесе пĕтернĕ. Нимĕç салтакĕсем Ордино ялĕнче пурăнакансене ним хăвармиччен çаратнă. Бандитсем пĕтĕм одеалсене, вырăн çине сармалли япаласене, урана тăхăнмаллисене, чашăк-тирĕксене, витресене, çимелли япаласене, кайăк-кĕшĕке, выльăх-чĕрлĕхе туртса илнĕ. Фашистсем пĕр татăк çăкăр та, пĕр пĕрчĕ çăнăх та хăварман. Тимонино, Петрово тата ытти ялсене те фашистсем массăллăн çаратнă. Фашистсен вăрă-хурахĕсем урамра иртсе пыракан çынсенчен çĕлĕкĕсене, тумтирĕсене, аттисене хывса илнĕ. Оккупациленĕ районсенче 16 çултан пуçласа 60 çула çитичченхи çынсене пурне те фашистсем ирĕксĕрех йывăр ĕçе хăваласа каяççĕ.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн летчиксем ноябрĕн 20-мĕшĕнче тăшманăн 47 танкне, пехотăпа боеприпассем тиенĕ 392 автомашинине, тĕрлĕрен грузсем тиенĕ 115 лавне, штабсен 7 автобусне, зенитнăй пулеметсем вырнаçтарса лартнă 6 автомашинине, 10 орудине пĕтерсе тăкнă тата неприятелĕн салтакĕсемпе офицерĕсене 1600 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен Лопатин юлташăн боецĕсем противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пырса, тăшманăн 460 автомашинине, боеприпассемпе вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 320 лавне, 37 орудине, 20 станковăй пулеметне, 43 мотоциклне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 3200 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Поленов юлташăн чаçĕ нимĕçсен хаяр атакисене ăнăçлăн сирсе янă. Çапăçу хирне тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли, 11 миномет, танксене хирĕç пемелли 2 тупă, 12 пулемет тата автоматсем нумай выртса юлнă.

* * *

Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем допрос тунă чухне каласа панисем Германи войскин вăрçас шухăш-кăмăлĕ пĕрмаях чакса пынине çирĕплетсе параççĕ. Тыткăна лекнĕ унтер-офицер Генрих Вассонг çапла каланă: «Малтанхи сивĕсемех салтаксен шухăш-кăмăлне хытă пусăрăнтарчĕç. Пирĕн ăшă обмундировани çук. Кун пек сивĕре вăрçма питĕ те хĕн. Эпир темиçе эрне хушши ĕнтĕ кĕпе-йĕмсем улăштарман, пире пыйтăсем çисе яраççĕ», тенĕ. 14-мĕш горнострелковăй дивизин 13-мĕш полкĕнчи салтак Вернер Маринген, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Хĕрлĕ Çар хирĕç тăрасси пĕрехмай ÿссе пынине, нимĕçсем Российăна çĕнтерейрес çуккине салтаксем кураççĕ» тенĕ.

276-мĕш пехотнăй полкри тыткăна лекнĕ салтак Петер Зайцель çапла калавă: «Юлашки виçĕ эрне хушшинче пирĕн полк валли апат-çимĕç питĕ çителĕксĕр парса тăчĕç. Çимелли япаласене вырăнтах хамăрăн шырама тиврĕ, урăхла каласан, хресченсенчен вăйпах турта-турта илтĕмĕр. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем япăх, мĕншĕн тесен вăрçă хăçан пĕтесси пăхса та курăнмасть. Нумай стрелоксен шинелĕсем те çук, Сапуç çук. Салтаксемпе офицерсем пурте пыйтланса çитрĕç». 13-мĕш горнострелковăй полкăн 7-мĕш ротинчи санитар унтер-офицер Карл Стойле пĕлтернĕ тăрăх, чаçсенче чирлисен хисепĕ çав тери хăвăрттăн ÿссе пырать. «Пирĕн ротăра кăна юлашки кунсенче 13 салтак ангинăпа, гриппа тата бронхитпа чирлесе ÿкрĕç»,—тесе каласа парать çав санитар. 236-мĕш дивизин обозĕнчи унтер-офицер Отто Гилерт çапла каланă: «Вăрçă халех пĕтет тенине салтаксем ĕненми пулчĕç. Российăн анлă çĕршывĕ нимĕçсен çарне çăтса ярĕ, совет войскисемпе партизансем вара ăна майĕпе пĕтерсе пырĕç, тесе шухăшлаççĕ нумайĕшĕсем».

* * *

Саратов облаçĕнчи ĕççыннисем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ, фашистла оккупантсене пĕтерсе тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Облаçри вунăшар предприятисем хăйсен çулталăклăх заданийĕсене срокчченех пурнăçа кĕртнĕ. Саратоври тырпул авăртакан иккĕмĕш №-лĕ завод хăйĕн çулталăклăх программинчен ирттерсе 6000 тонна ытла пĕрремĕш сортлă çăнăх панă. Çу туса кăларакан пĕрремĕш номерлĕ заводра ĕçлекенсем, çулталăклăх заданине ирттерсе тултарса, çул вĕçленнĕ тĕле планран ирттерсе татах 500 тонна çу туса кăларма пулнă. Предприятисенче нормăна ирттерсе тултарассишĕн патриотсен движенийĕ анлăн сарăлса пырать. Саратоври судносем юсакан заводăн котельнăй тата тимĕрçĕ цехĕсенче ĕçлекен кашни рабочиех халĕ икшер норма тултарса пырать. Заводри тимĕрçĕсем Строгович, Лошкарев тата Юрлов юлташсем сменăра 7-шер нормăна çити параççĕ. Саратоври комбайнсен заводĕнчи нумай рабочисем рекордсем туса ĕçлеме пуçланă. Автоматчик Романцев юлташ задание 347 процент тултарнă. Ноябрĕн 1-мĕшпе 19-мĕш хушшинчи вăхăтра слесарь Поморов кашни сменăра вăтамран 3 норма çурăшар тултарса пынă.

Облаçри нумай колхозсем государствăна тырă тăратас плана тултарнă. Новоузенск, Александрово-Гайск, Духовницки тата ытти районсенчи артельсенче нумай колхозниксем хăйсен ытлашши тырпулне оборона фондне параççĕ. Новоузенск районĕнчи «Красный боец» артельри колхозниксем оборона фондне 180 центнер, Чапаев ячĕпе тăракан артельри колхозниксем 230 центнер тырă хывнă та ĕнтĕ. Новоузенск районĕнчи колхозниксем государствăна татах та 30.000 центнер тырă сутма йышăннă, 10 пин центнера яхăн вĕсем ссыпной пунктсене леçсе панă та ĕнтĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Фронтăн Клин, Волоколамск, Тула тата Ростов (Дон çинчи Ростов) участокĕсенче уйрăмăнах хаяр çапăçусем пулнă.

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче нимĕçсен 10 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

Баренцово тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн виçĕ транспортне путарнă.

* * *

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 16 танкне, 7 бронемашинине, пехотăпа боеприпассем турттарса пыракан 30 автомашинине, горючи тултарнă 14 цистернине, 10 орудине пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотин полкне пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи икĕ участокра ноябрĕн 21-мĕшĕнче противника хирĕç пынă хаяр çапăçусенче тăшманăн 50 автомашинине, 150 лавне, 14 орудине пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем противникăн 10 танкне, 19 орудине, 87 автомашинине тата автоматсем, пулеметсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче çапăçакан Замировский юлташăн чаçĕ икĕ уйăх хушшинчи çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Замировский юлташăн боецĕсем икĕ уйăх хушшинче нимĕçсен 11 танкне, боеприпассен икĕ складне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 2 самолетне персе антарнă, 9 полевой оруди, 22 миномет, 26 станковăй пулемет, 104 ручной пулемет, тăшман полкĕсен виçĕ ялавне, винтовкăсем, автоматсем, снарядсем, минăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Мускав облаçĕнчи партизансен активлăхĕ кунсеренех ӳссе пырать. Туллимар даннăйсем тăрăх, юлашки темиçе кун хушшинче вĕсем тăшманăн пехотине вăрçă хатĕрĕсене тиесе пыракан 49 автомашинине, 3 самолетне, темиçе танксемпе бронемашинăсене, снарядсем турттарса пыракан 8 лавне, штабсен 6 автобусне, горючи тултарнă 6 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, 5 пысăк кĕпере сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен 500 ытла салтакне тата 61 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

П. юлташăн отрядĕнчи партизансем, противотанковăй гранатăсемпе усă курса, фашистсен вăтам танкне стройран кăларнă. Юлашки кунсенче отряд противникăн яланах çӳремелли çулĕ çинчи виçĕ кĕпере сирпĕнтерсе янă. Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрядри партизансем ноябрĕн 11-мĕшĕнче засада тунă та, минăсем çине кĕртсе ярса, нимĕçсен бронемашинине тата нимĕç салтакĕсене турттарса пыракан икĕ грузовой машинине сирпĕнтерсе янă. Взрывсем туса тата тĕл персе, Совет патриочĕсем тăшманăн 30 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. А. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ ăнăçлăн çапăçса пырать. Ноябрь уйăхĕн варринче çак отряд нимĕçсен çар грузĕсем тиенĕ 18 лавне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Х. юлташ ертсе пыракан отряд противникăн обозĕ çине хăюллăн пырса тапăннă. Партизансем 5 автомашинăна сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен 48 салтакĕпе 5 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Германи фашисчĕсем шантаж туса тата хăратса Испанире авантюристсене, преступниксене тата çавнашкал ирсĕр çынсене пухса «кăвак дивизи» тунă та Совет Союзне хирĕç кĕрешме фронта илсе килнĕ. Гитлер «кăвак дивизие» Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтне янă, çапла майпа Германи çарĕсен пысăк çухатăвĕсене витсе хума шутланă. Малтанхи çапăçусенчех çав дивизин пысăк çухатусем пулнă. Çав дивизин командирĕ Испани генералĕ Грандес нимĕçсен армейски корпусĕн командирĕ патне янă донесенине пирĕн чаçсем тытса илнĕ. Грандес çав донесенире унăн дивизийĕ малтанхи çапăçурах хытă хавшаса ӳкни тата çынсем тĕлĕшпе çухатусем пысăк пулни çинчен пĕлтерет. Нумай ротăсенче 40-шер салтак кăна юлнă. «Кăвак дивизие» пухнă вăрăсем, çынна вĕлерекенсем, çаратакансем тата ытти преступниксем хушшинче çавăн пирки паника пуçланнă. Чĕрĕ юлнă «доброволецсем» кăштмай пулсанах киле тарма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çăмăллăнах çаратма ĕмĕтленни пурнăçа кĕмен. Хăйĕн воякисен шухăш-кăмăлне лайăхлатас тесе, генерал Грандес нимĕçсенчен ăшă тумтирсем, эрех тата çăкăр ярса пама ыйтать. Унăн ыйтăвне хирĕç нимĕç генералĕ фон Лееб «кăвак дивизин» командованине дивизи пысăк çухатусем тӳснишĕн хăй кулянни çинчен пĕлтерсе ответленĕ.

* * *

Нимĕç оккупанчĕсем Прибалтикăра пурăнакан халăхсене вĕçĕмех çаратаççĕ. Вильно, Каунас, Либава, Рига тата ытти хуласенчен хаклă оборудованисене, тĕрлĕ япаласене халăхран туртса илнĕ. Искусство япалисене, апат-çимĕçĕн пĕтĕм запасĕсене Германие ăсатаççĕ. Нумай ялсенче Германи çарĕ валли лашасене, тракторсене, автомашинăсене, двигательсене тата велосипедсене пурне те туртса илнĕ. Çак кунсенче нимĕçсем Ригăра кашни çуртах ухтарса тухнă, çавăн чухне урамра пыракан автомашинăсемпе лашасене пурне те тытса илнĕ. Халăха çавнашкал çаратнă пирки Литвари, Латвири тата Эстонири хуласемпе ялсенче халĕ выçлăх тăрать.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн танковăй бригада виçĕ кунхи çапăçура противникăнне 15 танк, 5 бронемашина тата пулеметсемпе минометсен батарейисене нумай пĕтерсе тăкнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Захарин юлташăн артиллери чаçĕсем ноябрĕн 22-мĕшпе 23-мĕш хушшинче çĕрле противник миномечĕсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, танксене хирĕç пемелли тупă тата пулеметсем вырнаçса тăракан ДЗОТ-а çапса çĕмĕрнĕ, боеприпассен пысăк складне взрыв туса аркатнă.

Виçĕ красноармеецпа разведкăна кайнă старший сержанта Князев юлташа тăшман çавăрса илнĕ пулнă. Хăюллă боецсем, противника хирĕç çапăçăва тухса, фашистсен 12 салтакне пĕтерсе тăкнă, минăсен пĕр ещĕкне, патронсен лентисене нумай тытса илнĕ те хăйсен чаçне ăнăçлăн таврăннă.

* * *

Таганрог рабочийĕсен партизанла отрячĕсем кĕрешӳре пысăк активлăх кăтартаççĕ. Фашистсем тĕрлĕрен çар снаряженийĕ хумалли пысăк база туса хунă портри складра ноябрĕн 15-мĕшĕнче вăйлă пушар тата взрыв пулнă. Склад тата унта выртакан снаряжени тĕппипех çунса кайнă. Железнодорожниксенчен тăракан партизансен группи И. станцийĕ патĕнче тăшманăн тĕрлĕрен инструментсем турттарса пыракан 3 автодрезинине взрыв туса аркатнă тата мĕнпур стрелкăсене стройран кăларнă. Станцири нимĕç салтакĕсен отрячĕ партизансене хирĕç тăма хăтланнă. Пĕр-пĕрин çине хирĕ-хирĕç персе тăнă чухне 13 фашиста вĕлернĕ. Пулăçсен колхозĕн председателĕ Ч. юлташ командир пулса ертсе пыракан пулăçсен партизанла отрячĕ противникăн утлă обозĕ çине пырса тапăннă. Партизансем нимĕçсен хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те продовольстви тиенĕ 17 лава пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Ноябрь уйăхĕнчи 5 кун хушшинче Таганрог хули таврашĕнчи районсенче партизансем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 80 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 8 грузовой тата 3 çăмăл машинисене çунтарса янă, нимĕçсен 13 мотоциклистне тата 5 салтакран тăракан утлă разъездне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гитлерла Германире çынсен резервĕсем пĕтсе пынине нумай тĕрлĕ фактсем çирĕплетсе параççĕ. Пысăк çухатусем тӳснине пула фашистсен ирĕксĕрех фронта тĕрмери çынсене, инвалидсене, полицейскисене яма лекет, çавăн пекех оккупациленĕ çĕршывсенче юлнă çар чаçĕсене те хĕвелтухăç фронтне куçарса килме лекет. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕ Карл Фальц çапла каласа панă: «Мана судпа айăпласа Имеландри арестнăй çуртра тытса усранăччĕ, унта пĕтĕмпе 1600 заключеннăй пулнă. Нумаях пулмасть, вĕсенчен нумайĕшне, çав шутрах мана та, фронта ячĕç». Мария Лейбольд Ворцбюргран хăйĕн упăшки патне çапла çырать: «Пирĕн мĕнпур полицине те халĕ ĕнтĕ Российйăна янă». Теодор Гейнц ефрейтор хăйĕн тăванĕсем патне çырнă çырăвĕнче çапла пĕлтерет: «Пирĕн хушăра ваттисем те, çул çитменĕ çамрăксем те пур. Ман шухăшпа, тиркесе тăмасăрах пурне те илеççĕ». Фашистла бандитăн Генрих Редерăн, Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче вилнĕскерĕн, çумĕнче киле ярса ĕлкĕреймен çыру тупнă. Çав çырура вăл çапла çырать: «Юлашки вăхăтра пирĕн паттăр та хăюллă чаçа тутисем çинче амăш сĕчĕ типсе çитмен айвансемпе уксах-тĕксĕк, чăлах тата сĕрсе кайнă инвалидсемпе тултарса параççĕ. Малашне те çакăн пек пулса пырсан, çапăçакансем пирĕн пулмаççĕ те».

* * *

Совет железнодорожникĕсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлесе, фронт валли кирлĕ грузсене вăхăтра çитерсе тăраççĕ. Хусан чугунçулĕ çинче вăрçă пуçланиччен лунинла паровозсен бригадисем темиçе вуншар кăна пулнă. Халĕ вĕсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Машинистсенчен нумайĕшĕсем йывăр тиенĕ поездсене техникăллă нормăпа палăртнă хăвăртлăхран иртерсе турттараççĕ. Красноуфимск машинисчĕсем Кузнецов, Орлов тата Павлов юлташсен паровоз бригадисем вăрçă пуçланнăранпа 100-шер тонна кăмрăк перекетлесе хăварнă. Путеецсем лунинла ĕç меслечĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Çулăн Чернушински дистанцийĕнчи 195 путеобходчик мĕнпур вак-тĕвек юсав ĕçĕсене хăйсен вăйĕсемпе туса пырать. Çулăн Красноуфимск дистанцийĕнчи бригадир Исупов юлташ юлашки уйăхсем хушшинче хăй тĕллĕнех 170 шпал юсанă. Çулăн хăйне шанса панă участокне вăл кăтартуллăн пăхать.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕН КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Мускав патĕнчи юнлă çапăçусем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен командованийĕ, темиçе кун каялла Мускав патĕнче çĕнĕ наступлени пуçласа ярса, çапăçăва йышлă резервсем тата нумай танксем кĕртсе ячĕ. Тăшман çĕнĕ наступленире танксемпе усă курса хаяр атакăсем тăвать. Противник пехотин подразделенийĕсем ялан тенĕ пекех танксем пулăшса пырсан çеç çапăçăва кĕрсе каяççĕ. Пур çĕрте те юнлă çапăçусем пулса пыраççĕ.

Тăшман хăй пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах, Мускав патне пымалли çулсене тытса илесшĕн тăрăшать. Тăшманăн вăйĕ нумайрах пулнă пирки хăшпĕр участоксенче пирĕн чаçсен кăштах чакса оборона тумалли çĕнĕ вырăнсене куçмалла пулнă. Çĕнĕ вырăнсене куçассине пирĕн чаçсем лайăх организацилесе ирттернĕ. Уйрăмăнах хаяр çапăçусем çурçĕр участокĕнче тата Волоколамск енче пулса пыраççĕ. Çурçĕр участокĕн сылтăм флангĕнче тăшман хĕссе пынине пирĕннисем чарса лартнă. Нимĕçсен 110 танкĕ тата мотострелковăй дивизийĕ ĕнер ирех Ж. пункчĕ еннелле тапăнса килме тытăннă. Тăшманăн танксем тата пехота нумай пĕтнĕ, анчах та вăл пĕр яла кăна йышăнма пултарнă. Волоколамск енче наступлени тăвакан фашистла чаçсем К. патнелле татса кĕресшĕн, çапла вара шоссе çулĕсене тытса илесшĕн.

Тăшманăн хаяр атакисене совет войскисем хăюллăн сире-сире пăрахаççĕ. Х. районĕнче танксен пысăк çапăçăвĕ пырать. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет.

Фронтăн кăнтăр участокĕнче положени малтанхи пекех йывăр-ха. Тăшманăн танкĕсем Т. пунктне кăнтăр-хĕвелтухăç енчен çавăрса илесшĕн тата темиçе вырăнта пирĕн оборонăна татса кĕме хăтланаççĕ. Ермаков юлташăн чаçĕсенчи боецсемпе командирсем тăшманăн атакисене сире-сире пăрахаççĕ, кашни ялшăнах вăйлăн çапăçаççĕ. Уйрăм пунктсем пĕр кун хушшинчех темиçе хутчен те аллăран алла куçаççĕ. Можайск енче противник каллех нумай танксене тата пехотăна наступлене кĕртсе ярса темиçе яла тытса илчĕ. Пирĕн войскăсем çĕнĕ рубеж çине организованно куçрĕç, халĕ тăшмана хирĕç татах та хаяртарах контратакăсем тăваççĕ.

Совет мотоциклисчĕсем хăюллăн та хăвăрт контратака туса нимĕçсене В. ялĕнчен хăваласа кăларчĕç, çав ялта хăйсем çирĕпленсе ларчĕç.

Мало-Ярославец енче нимĕçсем малалла куçма хăтланни ăнăçлă пулман. Фронтăн çак участокĕнче çĕрле икĕ енĕ те хире-хирĕç артиллерирен тата минометсенчен персе тăнă.

Пирĕн самолетсен уйрăм отрячĕсем противникăн автобронетанковăй чаçĕсем çине тата пехота çине бомбăсем пăрахнă.

Пĕр участокра совет летчикĕсем нимĕçсен 8 танкне, çар хатĕрĕсем тиенĕ 25 автомашинине, икĕ зенитнăй установкине тата тăшман пехотин пĕр ротине пĕтерсе тăкнă.

И. ГРИБОВ.

Пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе пыраççĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, ноябрĕн 20-мĕш. Пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе пырса хăшпĕр участоксенче контрнаступленисем тума пуçланă. Поленов командирăн чаçĕ, ăнăçуллă маневр тума шутласа, вăйлă атака пуçарса янипе, нимĕçсене Х. ялĕнчен хăваласа кăларнă. Тăшман пехотине хирĕç контратака туса, Поленов юлташăн боецĕсем нимĕçсене хирĕç штыкпа тăрса çапăçма тухнă. Штыкпа тата прикладпа тăрса çапăçакан красноармеецсем фашистсен взводне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Х. ялĕн хĕвелтухăçпе кăнтăр енĕсене хăйсен аллине туртса илнĕ. Нимĕçсем вара çапăçăва пирĕннинчен виçĕ хут ытларах вăйсем кĕртсе янă та çав ял тулашĕсене каллех йышăнса илнĕ.

Противник Б. поселокне йышăнса илме хăтланнине пирĕн тепĕр подразделени ăнăçлăн сирсе янă. Халь çав районра халăх пурăнакан кашни пунктшăн вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Калинин районĕнче тăшман хăйĕн активлăхне вăйлатрĕ. Ĕнер пехотăн икĕ батальонĕ, пирĕн оборонăн лайăх рубежне туртса илес тесе, В. ялне темиçе хутчен те атакăласа пăхнă. Нимĕçсен мĕнпур атакисене сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен нумай салтакĕсене тата темиçе офицерне вĕлернĕ.

Калинин хулинче Шевцов юлташăн артиллери чаçĕсем тул çутăлса килнĕ чухне икĕ хутчен вăйлă атака тунă. Тăшман персе тăракан чылай точкăсене, унăн автомашинисене тата пехотине нумай пĕтерсе тăкнă.

Нумаях пулмасть, фронтри участоксенчен пĕринче, çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: пирĕн блиндажри оруди расчечĕсенчен пĕрин çине нимĕçсем граната ывăтнă. Расчет пĕтсе ларас хăрушлăх умне тухса тăнă. Çак вăхăтра блиндажра пулнă политрук заместителĕ Остапенко юлташ çухалса кайман, вăл гранатăна сиенĕнчех ярса илсе блиндажран аяккалла ывăтнă. Граната противник тăракан тĕлте çурăлса кайнă. Каярахпа çав блиндажри расчета артиллерирен персе янă снаряд çурăлса тăпрапа хупласа лартнă. Çакăн пек положенире 12 сехет хушши пулса тата тĕттĕм пулассине кĕтсе тăнă боецсем çĕре чавса блиндажран тухнă та нимĕç войскисем тăракан çĕртен хăтăлса, хăйсен батарейипе пĕрлешнĕ. (ТАСС).

Тула енче

ТУЛА ЕНĔ, ноябрĕн 22-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Тула хулин кăнтăр-хĕвелтухăç енчи вăйлă çапăçусем лăпланмаççĕ. Фашистсен командованийĕ çĕнĕ резервсем илсе пырса çапăçăва кĕртет. Тăшман пирĕн оборонăна шăлалла татса кĕрес шутпа çаплах малалла талпăнать. Танксен, артиллеристсен, стрелоксен тата ыттисен подразделенисем пĕлсе кĕрешнипе тăшман питех те пысăк çухату тӳсет. Пирĕн чаçсем тăшман çурçĕрелле тата хĕвелтухăçнелле кайма хăтланса пăхнине чарса тăраççĕ.

Паян пирĕн фронтăн сулахай флангĕнчи мĕнпур участоксенче çапăçусем пулса пынă. Танксем хыççăн пыракан нимĕçсен мотопехотин пысăк групписем иртен пуçласа чылай вырăнсенче пирĕн подразделенисене атакăланă. Пирĕн танкистсем тата артиллеристсем пулăшнипе совет пехотинецĕсем тăшман хĕснине сире-сире яраççĕ. Хăшпĕр рубежсенче фашистсем хăйсен чаçĕсене 5—6 хутчен атакăна кĕртнĕ. Уйрăмах тăшман В. хули районĕнче активлăн кĕрешнĕ. Малтан çав района тăшман танкĕсен группи кĕрсе кайнă, паян фашистсем мĕнле пулсан та хула патне çывхарма шутланă. Тăшман авиацийĕ хăйсен танкĕсем валли çул уçас шутпа кунĕпех хула патне пыракан çулсем тата ялсем çине бомбăсем пăрахнă. Анчах тăшман машинисем хула çывăхне нимĕн чухлĕ те пыма пултарайман. Вĕсем хуларан аякра. Пирĕн танкистсем тата танксене хирĕç перекен артиллери вĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Пиллĕкмĕш кун пыракан хаяр çапăçусенче пирĕн боецсемпе командирсем тата политработниксем пысăк хăюллăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ.

Корнеев командирăн подразделенийĕ Б. ялне хӳтĕлесе тăнă. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн офицерĕсемпе салтакĕсем питех те нумай вилнĕ тата аманнă. Тăшман çитĕнӳ тăвайман. Ун хыççăн нимĕçсем хăйсен юратнă меслечĕпе пирĕн подразделение çавăрса илме шутланă. Ноябрĕн 19-мĕшĕнче фашистсен полкĕ тата 40 танкĕ ытла яла виçĕ енчен атакăланă. Пирĕн боецсем паттăррăн хирĕç тăнă пулсан та, нимĕçсем яла кĕме пултарнă. Урамсенче çапăçусем пуçланнă, çав çапăçу çĕрĕпех пынă. Нимĕçсен машинисем çине гранатăсем тата горючи тултарнă бутылкăсем пăрахса, засадăсенчен тĕл персе тивретсе, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă. Тепĕр кунне тул çутăлас умĕн боецсем тăшмана ялтан хăваласа кăларнă. Ноябрĕн 21-мĕшĕнче ирхине çĕнĕ вăй илсе пырса, тăшман çĕнĕрен атака тума пуçланă. Нимĕçсем автоматчиксем лартнă вуншар танксене наступлене кĕртнĕ. Тăшманăн танкĕсем персе тăмалла тата хăйсен гусеницисемпе пирĕн огневой точкăсене таптамалла, автоматчиксен вара пирĕн пехота çине персе тăмалла пулнă. Пирĕн боецсем тăшманăн çав тактикине часах тавçăрса илнĕ. Вĕсем танксене пирĕн оборонăн линийĕ урлă каçса кайма ирĕк панă, кайран вара пулеметсенчен, минометсенчен тата винтовкăсенчен персе автоматчиксене вĕлерсе пĕтернĕ. Çакăн хыççăн нимĕç танкĕсен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, тепĕр пайĕ каялла тарнă. Пĕр чарăнмасăр пынă пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче Корнеев командирăн боецĕсем нимĕçсен 23 танкне тата фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Марторосьян командирăн боецĕсем тăшмана хăюллăн çĕмĕреççĕ. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче вĕсем нимĕçсен 9 танкне пĕтерсе тăкнă, 2 гаубица, 6 мортира, 8 станковăй пулемет тытса илнĕ, нимĕç оккупанчĕсен чĕрĕ вăйне нумай пĕтерсе тăкнă.

Г. КРЫЛОВ.

Федюнинский командирăн подразделенийĕсем тăшмана хĕсеççĕ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, ноябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ленинград фронтĕнче кĕрешекен Федюнинский командирăн подразделенийĕсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçаççĕ. Иртнĕ талăк хушшинче противника Р. пунктран тата чугунçул çинчи К. разъездĕнчен хĕссе кăларса, çав пунктсене йышăнса илнĕ. С. районĕнче малалла куçса пырса, пирĕн войскăсем нимĕçсен темиçе подразделенине виçĕ енчен çавăрса илнĕ.

Нимĕçсем çавтери вăйлăн хирĕç тăнине пăхмасăрах, Федюнинский подразделенийĕсем противника малалла хĕссе пыраççĕ, ăна техника енĕпе те, чĕрĕ вăйсем енĕпе те пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Сталин юлташ лартнă задачăсене хăвăрт пурнăçа кĕртсе пырар

Ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыраççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Красноармейски ялсоветĕнче ĕçлекен налог агенчĕ Васильев юлташ çак ĕçе кăçал сентябрь уйăхĕнче кăна кĕнĕ. Вăл малтанхи кунсенчех колхозниксемпе, единоличниксемпе çирĕппĕн çыхăнса ĕçлеме тытăннă. Колхозниксене ялхуçалăх налогĕпе страховка укçи пухмалли законсем çинчен тата укçа-тенкĕ парăмĕсене государствăна срокра парса татни хальхи вăхăтра уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Васильев юлташ колхозниксем налог укçи пырса парасса ялсовет канцелярийĕнче кĕтсе лармасть. Вăл укçа-тенкĕ парăмĕсене тӳлесе татман çынсем патне килĕсене каять, вĕсене парăмсене срокра тӳлесе татма кирли çинчен ăнлантарса парать. Çапла ĕçлесе вăл паянхи кун тĕлне IV-мĕш квартал планне 88,4 процент пурнăçланă, ку ĕçре Васильев юлташа ялсовет председателĕ Павлов юлташпа колхоз председателĕсем куллен пулăшса пыраççĕ.

Çавăн пекех Тип-Çырма ялсоветĕн налог агенчĕ А. Семенов юлташ та укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартал планне 91,4 процент тултарнă та ĕнтĕ.

З. ИГНАТЬЕВ.

Колхозсем государствăна аш-какай, сĕт-çу параççĕ

Шупашкар районĕнчи мĕнпур колхозсенче Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада пысăк çĕкленӳпе сӳтсе яваççĕ. Çулпуç, çĕршывпа фронт валли тырпул тата аш-какай ытларах та ытларах парса тăмалла, тесе чĕнсе каланине колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнипе ответлеççĕ.

Сталин юлташ докладне сӳтсе явнă хыççăн юлашки пилĕк кун хушшинче колхозсем государствăна 554 центнер тĕштырă, 17 центнер типĕтнĕ çĕрулми тата 3 центнер ытларах типĕтнĕ пахча-çимĕçсем леçсе панă.

«Осоавиахим», «Правда», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те çак кунсенче государствăна поставка шучĕпе тĕштырă парса татрĕç. Колхозсенче государствăна аш-какай парасси те вăйланчĕ. Çак кунсенче кăна «КИМ» колхоз 10 центнер ытларах, «Чăваш Коммуни» колхоз 4 центнер ытларах аш-какай панă. «Знамя революции» колхоз кăçалхи çулшăн аш-какай парса татса, 1942 çулшăн 10 центнер панă. «Ударник» колхоз çитес çулшăн аш-какай йăлтах парса татнă. «Дружба», «Вторая пятилетка», «КИМ» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем кăçалхи çулшăн государствăна сĕт-çу парса татса, çитес çулшăн пама тытăнчĕç.

Юлашки вăхăтра пахча-çимĕçсем типĕтсе государствăна парасси те чылаях вăйланчĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз 105 килограмм, «Крахмал» колхоз 126 килограмм, «Чуваш ЦИК» колхоз 292 килограмм пахча-çимĕç типĕтнĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Производствăри хастарлăх

КУСЛАВККА. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă кунсенче каланă историллĕ сăмахсем Куславкка комбинатĕнчи рабочисемпе интеллигентсем хушшинче производствăллă çĕнĕ çĕкленĕве пуçарчĕ.

Ноябрĕн 8—9-мĕшсенче пур цехсемпе сменăсенче те рабочисен митингĕсем пулса иртнĕ. Митингсенче тухса калакан юлташсем, комбинатри мĕнпур рабочисемпе служащисен шухăшне палăртса, фронта валли мĕн кирлине пурне те туса пама пулчĕç.

Çулпуç пирĕн хамăрăн Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшма чĕнсе калани çине рабочисем, интеллигентсем конкретнăй ĕçсемпе ответлеççĕ.

Тăваттăмĕш цехăн коллективĕ, унăн начальникĕ Н. С. Петрученко юлташ, задание ирттерсе тултарма тата пысăк пахалăхлă продукци пама пулнă. Коллектив хăй панă çак сăмаха пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл кĕске вăхăтрах çĕнĕ йышши продукци тума вĕренсе çитнĕ. Çак цехăн слесарĕ Подольский юлташ нормăна 500—600 процент тултарса ĕçлет. Слесарь Челышев юлташ питех те кирлĕ ĕç тума задани илсен, çав ĕçе туса пĕтериччене цехран тухмасăр тăватă талăк хушши ĕçленĕ.

Иккĕмĕш цехри столярсем М. Тихоновпа А. Штырков тата çав цехăн мастерĕ И. Ульянов комсомолец производствăра хăйсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ, заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Пĕр цехăн аслă мастерĕ Павлов юлташ çĕнĕ продукци туса кăларас ĕçе хăвăрт йĕркелесе янă, çав япаласене малтанхи хут туса кăлараççĕ пулсан та, унта нормăна тултарса пыраççĕ. Цехри сменнăй мастер А. Мошкова юлташ кашни кунах 1,5—2 норма чухлĕ ĕçлет. Кунсăр пуçне вăл 8 ученика ĕçлеме вĕрентет.

Çапла вара комбинат коллективĕ Сталин юлташ чĕнсе калани çине конкретнăй ĕçпе ответлет.

В. ЧЕБУХОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. МТС работникĕсем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕтĕмпе 35 тир, ваттă хурса çĕленĕ 3 фуфайка, 8 ăшă кĕпе, 7 мăшăр алшиш, 3 мăшăр чăлха, 3 çĕлĕк, 2,5 килограмм çăм, 1 мăшăр çăматă, 1 ăшă шалавар, 300 тенкĕ укçа тата ытти япаласем те пухăннă. МТС-ăн аслă агрономĕ М. Перлов пĕр мăшăр çăматă, старший механик Кудрявцев ваттă хурса çĕленĕ пĕр фуфайка панă. Пухăннă тирсенчен 4 кĕрĕк пиншак, 1 тăлăп тата 1 жилетка çĕлетеççĕ.

В. ВИКТОРОВ.

* * *

Хирти Сĕнтĕрти (Комсомольски р.) «Коммунар» колхоз çак кунсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 7 мăшăр çăматă, 15 мăшăр носки, 10 мăшăр алшиш, 10 алшăлли, икĕ мăшăр аялти кĕпесем, минтер пичĕсем хатĕрлесе районри комиссине леçсе пачĕ. Кусемсĕр пуçне пухнă 38 тиртен колхозра кĕрĕк пиншаксем çĕлеме тытăннă.

С. ЧУГУНОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли Советскинчи вăтам шкулăн преподавателĕсем М. Филиппов юлташ 6 тир, икĕ кĕпе, çĕлĕк, Никитин юлташ 2 тир, çĕлĕк, кĕпе панă. Вĕсен примерĕ тăрăх ытти преподавательсем те 3—4-шар япала пачĕç. Шкулта вĕренекен хĕрачасем красноармеецсене валли енчĕксем çĕлеççĕ.

В. АНДРЕЕВ.

Парнесем параççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри ĕçсыннисен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем парас шухăш-кăмăлĕсем ӳсех пыраççĕ.

Колхозсем оборона фондне укçан, заем облигацийĕсем, тырă, тимĕр-тăмăр тата ыттисене парса пулăшаççĕ.

Çӳлти Улмалуйри «Авангард революции» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем çĕлеттерме 347 тенкĕ укçа пухрĕç.

Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем 1000 килограмм ытла тимĕр-тăмăр пухса панă. Икĕ хутчен ирттернĕ воскресникре тунă 765 ĕçкунĕ çине тивекен 1530 килограмм тырра, 4825 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне хывнă.

Комсомолецсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли табак енчĕкĕсем çĕлеме тытăнчĕç. Ку ĕçе пирĕн районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем тата пионерсемпе шкул ачисем активлăн хутшăнчĕç.

«Красный труженик» колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ 30 енчĕк, Аксаринри пуçламĕш шкулти пионерсем 21 енчĕк, Шупашкар-Ĕсмĕлĕнче 20 енчĕк çĕлесе панă.

Ф. НИКОЛАЕВ.

Волоколамск енче

ВОЛОКОЛАМСК ЕНĔ, ноябрĕн 22-мĕш. **(ТАСС спец. корр.).** Волоколамск енче талăкĕпех вăйлă та юнлă çапăçусем пыраççĕ. Фашистсем Волоколамск çулĕ çине кăнтăр-хĕвеланăç енчен пырса тухма хăтланса, грунтовой çул енĕпе наступлени пуçласа янă тата пирĕн оборонăн вăйсăртарах вырăнĕсене шыраса пĕлме ĕмĕтленнĕ. Анчах çакăнта вĕсене пирĕн участокри Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вăйлăн хирĕç тăрса кĕтсе илнĕ. Паянхи кун ирпеле нимĕçсем И. хулан кăнтăр-хĕвеланăç енчи тулашне пĕр батальона яхăн пехота, юланутçăсен эскадронне, 50 мотоциклист, 50 велосипедист янă, вĕсене танксен пысăк мар ушкăнĕ хӳтĕлесе пынă. Фашистсем хулана çавăрса илсе, Мускав патне каякан шоссе çулне татса илме шутланă.

Макаров командирăн истребительнăй батальонĕ противник çинчен паха сведенисем командовани патне вăхăтра çитернĕ. Разведка пĕлтернисем тăрăх, Озаренко командирăн чаçĕсем тăшман группировки çине артиллерирен пеме тытăннă. Сергеев командирăн танковăй подразделенийĕ пехотăпа пĕрле пулса фашистсене хирĕç хăватлăн пыра-пыра çапнă. Каç пулас умĕн тăшмана хуларан виçĕ километра çити К. тата Г. ялĕсем патнелле хăваласа янă.

Тăшман К. тата Г. ялĕсенче хăйĕн вăйĕсене пухнă чухне пулнă çапăçура, лейтенант Янченко командир пулса ертсе пыракан бронепоезд тăшман çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. К. тата Г. пункчĕсем çине 220 снаряд ытла кăларса янă. Çакăнта тăшман пехотин икĕ батальонне, автоматчиксене çĕр çынна ытла пĕтерсе тăкнă тата 8 танк çĕмĕрнĕ.

Тĕттĕм пулса çитнĕ май, пирĕн артиллери К. тата Г. ялĕсем çине вăйлăн персе тăнипе, çав пунктсенче пулнă противника пĕтерсе тăкнă.

Волоколамск енчи лару-тăру çапах та йывăр-ха. Анчах та пирĕн боецсем тăшман малалла куçнине тытса чарса, ăна аркатса тăкма кирек хăçан та хатĕр тăраççĕ.

В. АРЕФЬЕВ.

Ертсе пырас ӗҫсене куҫарнӑ

ҪӖМӖРЛЕ. (**«Чӑваш Коммуни» корр.**) Древкомбинатра ҫак юлашки уйӑхсенче чылай стахановецсемпе инженерно-технически работниксене аслӑрах вырӑна—ертсе пырас ӗҫсене куҫарнӑ. Ку таранччен ӗҫре хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ работниксем ответлӑ тата пысӑкрах ӗҫсене куҫнӑ хыҫҫӑн та начар мар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем, хӑйсен опычӗсемпе усӑ курса, ӗҫре паха результатсем кӑлартаҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш номерлӗ цехри столяр-стахановец С. Волков юлташ хӑйне панӑ заданисене ялан ирттерсе тултарнӑ, вӑл туса кӑларнӑ продукцие техприемщиксем лайӑх пахалӑхпа йышӑннӑ. Нумаях та пулмасть, цех начальникӗ Волков юлташа техприемщика куҫартӗ. Хӑйне шанса панӑ ӗҫе Волков юлташ ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать, унӑн алли витӗр пӗр брак продукци те тухмасть.

Ҫак цехрах смена мастерӗ пулнӑ М. Подклетновпа В. Власов диспетчера цех начальникӗсем пулса ӗҫлеме куҫарнӑ, техрук А. Сафонов юлташ иккӗмӗш уйӑх ӗнтӗ комбинатри производствӑпа диспетчерски бюро начальникӗ пулса ӗҫлет.

А. Манина юлташ комбината укладчицӑна килсе кӗнӗ. Каярахпа ӑна сушильщицӑна куҫарнӑ. Хастарлӑ работница хальхи вӑхӑтра техприемщица ӗҫӗсене тӑвать.Ултӑ ҫул каялла грузчик пулнӑ Н. Быстров та ҫултан ҫул ӳссе пырать. Юлашки ҫулсенче вӑл бригадирта ӗҫлерӗ, иртнӗ уйӑхра ӑна та приемщика куҫарнӑ. Ҫак ответлӑ ӗҫе Быстров юлташ малтанхи кунсенчех тивӗҫлӗн пурнӑҫласа пыма тытӑнчӗ.

— Унӑн алли витӗр япӑх пахалӑхлӑ продукци тухас ҫук, вӑл техникӑна лайӑх вӗренсе ҫитнӗ,—теҫҫӗ ун ҫинчен 7-мӗш номерлӗ цехри рабочисем.

1938 ҫулта грузчик пулса ӗҫлеме килсе кӗнӗ С. Иванов та ӳссех пырать. Нумаях та пулмасть, ӑна паропроводчик помощникне лартнӑ. Цех начальникӗ калавӑ тӑрӑх, вӑл пур ӗҫе те пысӑк хастарлӑхпа тӑвать.

Тӑххӑрмӗш номерлӗ цехри паллӑ стахановец-слесарь Г. Блохин юлташ иртнӗ уйӑхра хӑйӗн ӗҫ нормине, вӑтамран илсен, кашни кун 283 процент тултарса ӗҫленӗ. Ҫак кунсенче Блохин юлташа диспетчера куҫарнӑ. Хисеплӗ стахановец ҫӗнӗ ӗҫре те пример кӑтартса пырасса шанма пулать.

Вагонсем юсакан цех

КАНАШ. Ноябрӗн 21-мӗш. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ докладне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн вагонсем юсакан цехра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ хӑвӑрт ӳсрӗ. Цех коллективӗ сентябрь уйӑхӗнче ӗҫ нормине 145 процент, Октябрь уйӑхӗнче 152 процент тултарнӑ пулсан, ноябрӗн малтанхи икӗ эрнинче 158 процент тултарнӑ. Сталин юлташӑн чӗнӗвӗ ҫине ответлесе, чылай рабочисемпе работницӑсем нормӑран 2—3 хут ирттерсе ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Юлашки кунсенче кӑна цехра двухсотниксен ретне темиҫе ҫын хутшӑнчӗ. Трехсотниксем цехра пачах та пулманччӗ, халӗ вӗсем 13 ҫын шутланаҫҫӗ.

«Ҫӗршыва, фронта вагонсем кирлӗ чухлех парар!»

Ҫавӑн пек лозунгпа ӗҫлеҫҫӗ слесарьсемпе столярсен стахановла бригадисем.

Комсомолец Чернухин юлташ ертсе пыракан ҫамрӑксен бригади октябрь уйӑхӗнче планран ирттерсе 5 вагон юсаса кӑларнӑ. Ку уйӑхра бригада татах та хӑвӑртрах, татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тӑрӑшать. Вӑл ноябрь уйӑхӗн малтанхи икӗ эрнинче ӗҫ нормине 243 процент тултарчӗ.

Тӑваттӑмӗш номерлӗ комплексри чылай бригадӑсем юлашки вӑхӑтра уйрӑмах пысӑк ҫитӗнӳсемпе ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Столярсем Высоцкий тата Скрынник юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем ӗҫ нормине кулленех 300 процентран кая мар тултарса пыраҫҫӗ. Бригада членӗсем, мухтавлӑ столярсем, вӑхӑта шутламасӑр, вӑя шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫак йывӑр кунсенче инженерсемпе техниксем те хӑйсен пултарулӑхӗсене нихҫанхинчен ытла кӑтартаҫҫӗ. Инженер Марков юлташа специальнӑй заказ штампӗсен чертежне тума хушнӑ. Марков юлташ заказа мӗн пулсан та хӑвӑрт тата лайӑх тума кирлине ҫирӗп ӑнланнӑ. Вӑл, ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлесе, хӑйне панӑ заказа мухтава тивӗҫлӗ пурнӑҫланӑ. Завод директорӗ ӑна паха ӗҫӗшӗн уйӑхри ӗҫукҫипе премиленӗ.

Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницӑсем пурте ҫулпуҫ Сталин юлташ фронта мӗн кирлине пурне те пама чӗнсе каланине пурнӑҫлас шухӑшпа кӑмӑллӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Ӑмӑрту итогӗсем

ЕТӖРНЕ. Пушкӑртри Чкалов ячӗпе тӑракан промартель членӗсем, Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, уяв тӗлне ҫулталӑкри производствӑллӑ плана тултарма обязательство илнӗ. Ноябрӗн 7-мӗш тӗлне артель членӗсем ҫулталӑкри производствӑллӑ плана 101 процент тултарнӑ. Артельри М. Иванова, Н. Токарев, Е. Фомичева, Л. Смирнова юлташсем кулленхи нормӑна 150—160-шар процент таран тултарса ӗҫленӗ.

Чурпайри Киров ячӗпе тӑракан колхозӑн 5-мӗш бригадинчи (бригадирӗ Скворцов) колхозниксем уява ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫленипе кӗтсе илчӗҫ. Кӑҫал вӗсем гектартан вӑтам шутпа 17-шер центнер тӗштырӑ туса илнӗ.

Чылай ялсовечӗсенчи финанс агенчӗсем, уяв умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. 70 ҫулти К. Миронов юлташ Стрелецки тата Никольски ялсовечӗсен фин агенчӗ пулса ӗҫлет. Вӑл, уяв умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, укҫа-тенкӗ пухмалли IV-мӗш квартал планне 50 процент тултарма обязательство илнӗ пулнӑ. Миронов юлташ ӗҫлекен икӗ ялсовечӗ те укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе районра иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Полянка ялсовечӗн финагенчӗ Скребова IV-мӗш квартал планне 61 процент, Хӑмаркка ялсовечӗн финагенчӗ Толстов—52 процент тултарнӑ.

Чӑвашпромсоюзӑн Ирҫери «Ударник» артелӗн членӗсем, IV-мӗш кварталри производствӑллӑ плана 63 процент тултарса, хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑна ытлашшипех пурнӑҫланӑ. Артельри М. Глазунов, И. Маслов, Ф. Парфенов тата И. Архипов юлташсем ӗҫ нормине 130—140 процента ҫити тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

Полянка, Стрелецки, Чаганар, Чурпай колхозӗсем государство умӗнчи парӑмсене пӗтӗмпех парса татнӑ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Уроксем хыҫҫӑн...

Звонок янӑраса кайсан, вожатӑй Валя Маркелова васкасах 10-мӗш класа пычӗ. Вӗренекенсем ӑна ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ. Класран тухса кайма тӑнисем те вожатӑя курсан тепӗр хут сӗтел хушшине ларчӗҫ.

— Сирӗн паян политинформаци пулмалла вӗт-ха,—терӗ Маркелова вӗренекенсене.

— Ҫапла, информаци пулмалла. Анчах эпир ӑна кӑштах усӑллӑ хыҫҫӑн ирттерес тетпӗр. Ун хыҫҫӑнах тата пирӗн ПВХО кружокӗн занятийӗ пулать,—ответлерӗ комсомолка М. Герц.

Вӗренекенсем пурте класран тухрӗҫ. Вожатӑйпа Герц пионерсен пӳлӗмне кӗчӗҫ. Вӗсем халь анчах илсе килнӗ одеколон кӗленчисемпе бритва приборӗсене, сӑмса тутрисене майлаштарса хума тытӑнчӗҫ. Кусем—Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли хатӗрленӗ парнесем. Вӗсене пурне те вӗренекенсен вӑйӗпе туяннӑ.

— Пирӗн класс ҫитес канмалли кун каллех шӑлан ҫырли пухма каясшӑн. Анчах ҫанталӑк темле пулать вара. Уяр пулсан тем пекехчӗ,—терӗ Герц, ыран канмалли кун пулассине аса илсен.

— Аван. Ытти классем те каяҫҫӗ, хӑшӗсем тата тимӗр-тӑмӑр пухма кайма шутлаҫҫӗ. Анчах эсир кун ҫинчен паян тӗплӗреххӗн сӳтсе-явӑр,—асанлтерчӗ вожатӑй.

Паҫӑр пушаннӑ класс каллех вӗренекенсемпе тулчӗ. Черетлӗ политинформаци пуҫланчӗ. Герц вӗренекенсене юлашки эрнӗ хушшинче пулса иртнӗ хыпарсем ҫинчен пурне те ӑнланмалла тата кӗскен каласа парать.

— Пирӗн вӗренекенсен,—тет юлашкинчен информатор,—хальхи вӑхӑтра пур предметсемпе те отлично, лайӑх вӗренсе пымалла, дисциплина ҫирӗп пулмалла. Пирӗн задача—тӑван Хӗрлӗ Ҫара пур енӗпе те пулӑшса пырасси.

Информаци итленӗ хыҫҫӑн вӗренекенсем пӗрин хыҫҫӑн тепри ыйтусем параҫҫӗ, хушса калаҫҫӗ.

— Ҫӗршыв умне хӑрушлӑх тухса тӑнине эпир пӗлетпӗр. Ман шутпа, пирӗн уроксем хыҫҫӑн кашни кунах ӗҫлеме каяс пулать. «Пӗркунтӑрах эпир чугунҫул линийӗ ҫинче ӗҫлесе чылай пулӑшу патӑмӑр. Ҫавӑн пек ӗҫлессине организацилемелле,—тет малти парта хушшинче ларакансенчен пӗри.

Вӗренекенсем ку сӗнӳпе килӗшеҫҫӗ. Ҫакӑнпа политзаняти вӗҫленет.

* * *

Ҫӗмӗрлери 1-мӗш номерлӗ шкулта вӗренекенсем ҫак кунсенче пурте пӗр шухӑш-кӑмӑлпа, тӑван Хӗрлӗ Ҫара мӗнле те пулсан ытларах пулӑшас шухӑшпа пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем кашниех шкула йӗркеллӗ ҫӳресе, лайӑх вӗренме тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех пушӑ вӑхӑтсенче питех те кирлӗ ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Юлашки вӑхӑтра шкулта вӗренекенсем 3 тонна ытла тимӗр-тӑмӑр, 12 килограмм шӑлан ҫырли пухса государствӑна панӑ, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли 110 минтер пичӗ, алшишсемпе носкисем, алшӑллисем т. ыт. пухнӑ. Кунсӑр пуҫне тата ҫитес кунсенчех тӗрлӗрен япаласенчен тӑракан парнесем: махорка, папирос, одеколон, бритва таврашсем, сӑмса тутрисем ярса пама хатӗрленеҫҫӗ.

Шкул ачисем чугунҫул ҫинче те темиҫе хутчен ӗҫленӗ. Уншӑн тивекен укҫана вӗсем оборона фондне панӑ. Уроксем пӗтнӗ хыҫҫӑн кружоксен занятийӗсем пулаҫҫӗ. Литературӑпа техника, физкультурӑпа ҫар ӗҫне вӗренмелли т. ыт. кружоксем пур. Вӗсене хӑшне учительсем, хӑшне вӗренекенсемех ертсе пыраҫҫӗ. Занятисем йӗркеллӗ, расписанисем тӑрӑх пулса иртеҫҫӗ.

Шахматпа шашка кружокӗнче тӑракансем, акӑ, турнир туса ирттерчӗҫ. Ҫак кружока 8-мӗш «а» класра вӗренекен Ермишин ертсе пырать. Драма кружокӗ те начар мар ӗҫлет. Вӑл ӗнтӗ темиҫе хутчен спектакль лартса панӑ.

9-мӗш «а» класра вӗренекенсем Нина Карпова, Зоя Добросмыслова, Тамара Петрова, Рая Вавилова уроксем хыҫҫӑн ачасене ПВХО ӗҫне вӗрентеҫҫӗ, вӗсем—ПВХО инструкторӗсем. Валя Повереновапа Галя Федорова (10-мӗш класра вӗренекенсем) санитари ӗҫне вӗрентеҫҫӗ. Вӗсем занятисене яланах интересно ирттереҫҫӗ. Мӗншӗн тесен ку ӗҫе вӗсем юратса, тӑрӑшса туса пыраҫҫӗ. Вӑл ӗнтӗ ҫакӑнтан та лайӑх курӑнать: ку таранччен 639 ача ПВХО значок нормисене панӑ, аслӑрах классенче вӗренекенсенчен 14 ача ГСО-н II-мӗш сыпӑкри нормисене панӑ.

Пӗрремӗш номерлӗ шкулта вӗренекенсем хӑйсем илнӗ обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыни халь уҫҫӑнах палӑрать.

Хар. ЛИСИН.

Оборона ӗҫӗ шкулсенче

СОВЕТСКОЕ. Районри шкулсем хӑйсен ӗҫӗсене вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек ҫӗнетеҫҫӗ. Советскинчи вӑтам шкул юлашки вӑхӑтра ку тӗлӗшпе чылай ҫитӗнӳсем турӗ. Шкул пурнӑҫӗнче дисциплинӑшӑн, лайӑх вӗренӳшӗн тӑрӑшни пур енчен те курӑнса тӑрать. Кашни класрах ирхине, уроксем пуҫланиччен, учительсем ачасене Совет Информаци бюровӗн сводкисене вуласа, ӑнлантарса параҫҫӗ. Кашни учитель хӑйӗн предметне, отечественнӑй вӑрҫӑ ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса, хальхи вӑхӑта кирлӗ пек ӑнлантарса вӗрентет. Литературӑпа вӗрентекен Крылов юлташ, уйрӑм произведенисемпе паллаштарнӑ чухне, ҫав произведенисенче хальхи вӑхӑтшӑн мӗнле паха енсем пурри ҫинчен асӑрхаттарать. Ҫавӑн пекех физика, хими, географи преподавателӗсем те хӑйсен предмечӗсене оборона ӗҫне кирлӗ пек вӗрентсе пыраҫҫӗ.

Учительсем те, вӗренекенсем те ҫар ӗҫне тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ. Кашни вӗренекенӗн йывӑҫран тунӑ винтовка макечӗ пур. Вӗсем винтовка чаҫӗсемпе паллашаҫҫӗ, стройпа утма вӗренеҫҫӗ т. ыт. те.

Вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе военрук Н. Кузьмин юлташ питӗ тӑрӑшать. Халӗ пурте ПВХО нормине отлично пама вӗренеҫҫӗ.

Учительсем шкулта ҫеҫ мар, сывӑхри колхозсене те кайса, агитатор пулса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хресченсене фронтри хыпарсем ҫинчен тата правительство йышӑннӑ решенисем ҫинчен ӑнлантарса параҫҫӗ.

Ҫакӑн майлах Мӑн Ямашри тулли мар вӑтам шкулта та оборона ӗҫне тӑрӑшсах вӗренеҫҫӗ. Кашни класрах ПВХО кружокӗ ӗҫлет, вӗсенче пурӗ 84 ача вӗренет.

Кив-Тинкешри пуҫламӑш шкулта физкультура урокӗсене тулта, уҫӑ сывлӑшра ирттереҫҫӗ.

Чылай уроксене практикӑллӑ ӗҫсемпе ҫыхӑнтарса вӗренеҫҫӗ. Г. Лукина учительница географи урокӗсенче ачасене топографи карттипе паллаштарать, плансем ӳкермелли хӑнӑхусем парать. Географи урокне ҫапла практикӑпа ҫыхӑнтарса вӗрентни ачасене пит те интереслентерет, вӗсем географие юратсах вӗренеҫҫӗ.

В. АНДРЕЕВ.

Государствӑна тырпул, ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫ хӑвӑртрах парса татар

Сталин юлташ Октябрь уявӗн кунӗсенче каланӑ сӑмахсемпе хавхаланнӑ колхозниксем производствӑра татах та хастарлӑрах ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Совет Союзӗнчи халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ хамӑрӑн фронтпа ҫӗршыва валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чӗртавар ытларах та ытларах парса тӑма чӗнни ҫине ответлесе, пирӗн колхозниксем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хӑвӑртрах вӗҫлесе ҫитерес тесе ӗҫлеҫҫӗ, государство умӗнчи парӑмсене хӑвӑртрах парса татма тӑрӑшаҫҫӗ.

Партипе совет организацийӗсен ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсене хӑвӑрт вӗҫлесе ҫитерме, государствӑна тырпул, ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫ тата техникӑллӑ культурӑсене ҫак кунсенчех парса татма мӗнпур колхозниксене мобилизацилес пулать. Ҫакӑнпа пӗрлех ялхуҫалӑх продукчӗсен хатӗрлевне ӑнӑҫлӑн туса пырас тӗлӗшпе хатӗрлев халӑх комиссариачӗн районсенчи уполномоченнӑйӗсемпе ытти хатӗрлев организацийӗсен питех те оперативно ӗҫлени кирлӗ. Калас пулать, ӑҫта хатӗрлев халӑх комиссариачӗн районри уполномоченнӑйӗ хӑйӗн ӗҫне районри партипе совет организацийӗсемпе, ялсовечӗсемпе тачӑн ҫыхӑнса туса пырать, унта хатӗрлев планӗсене пурнӑҫа кӗртесси те ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Ҫавӑн пек ӗҫлесе пынине пула ӗнтӗ Элӗкпе Шупашкар районӗсем тырпул, пахча-ҫимӗҫ хатӗрлес тӗлӗшпе малта пыраҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн VIII пленумӗ хатӗрлев органӗсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетме хушса хӑварнӑччӗ. Анчах уйрӑм районсенче хатӗрлев органӗсем хӑйсен ӗҫне паянччен те вӑрҫӑ вӑхӑчӗ хушнӑ пек урӑхлатса ҫӗнетмен-ха. Ҫавна пула хатӗрлев ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Хатӗрлев халӑх комиссариачӗн Первомайски районри уполномоченнӑйӗ Корчагин юлташ, хӑйне шанса панӑ ӗҫе тӑвас вырӑнне, райисполкомӑн пӗр уйрӑм ялсоветӗнче ӗҫлекен уполномоченнӑйӗ пулса тӑнӑ. Ҫавна пула ӗнтӗ район ялхуҫалӑх продукчӗсене государствӑна парас тӗлӗшпе кая юлнӑ. Хӑшпӗр районсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене государство умӗнчи обязательствӑсене тултарассипе ҫыхӑнтарса пымаҫҫӗ. Ҫакна пула хатӗрлев ӗҫӗ юлса пырать. Уйрӑмах натуроплата тыррине парас ӗҫ кая юлнӑ. Юлашки вӑхӑтра государствӑна тырпул парас ӗҫ Первомайски, Хӗрлӗ Чутай, Октябрьски, Етӗрне районӗсенче вӑйсӑрланчӗ. Ҫакӑ вӑл—колхозсен тӗрлӗ ӗҫӗсене пӗр вӑхӑтрах туса пыманнинчен килет.

Государствӑна типӗтнӗ пахча-ҫимӗҫ парас плана Вӑрмар районӗ тата типӗтнӗ ҫӗрулми парас плана Шупашкар районӗ тултарнӑ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ типӗтнӗ пахча-ҫимӗҫ государствӑна тӑратас плана ытти районсенче те тултарма май пурри курӑнать. Анчах Улатӑрпа Ҫӗмӗрле районӗсенче ку ӗҫ калама ҫук япӑх пырать. Хатӗрлев халӑх комиссариачӗн Улатӑр районӗнчи уполномоченнӑйӗ Белоглазов тата Ҫӗмӗрле районӗнчи—Уваров юлташсем типӗтнӗ пахча-ҫимӗҫсем хатӗрлес ӗҫе организацилес тӗлӗшпе нимӗн те туман. Типӗтнӗ пахча-ҫимӗҫсемпе ҫӗрулми хатӗрлес плана кӗске вӑхӑтрах пурнӑҫа кӗртес пулать.

Ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗҫре хатӗрлев органӗсене партипе советсен вырӑнти организацийӗсем енчен пулӑшса пыни кирлӗ. Колхозсен государство умӗнчи обязательствӑсене кӗске срокрах тултарса ҫитерме тӑрӑшмалла. Ҫак ӗҫе ялти актива анлӑн явӑҫтарса хатӗрлев планӗсене хӑвӑртрах пурнӑҫа кӗртмелле.

Хатӗрлев халӑх комиссариачӗн районсенчи уполномоченнӑйӗсен, хӑйсен агенчӗсем урлӑ, кашни колхоз тата хуҫалӑх, кашни единоличник государствӑна тырпул, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ парса татнипе татманнине тӗрӗслесе тӑрас пулать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра ялхуҫалӑх продукчӗсен хатӗрлевне ӑнӑҫлӑн туса пыни хамӑрӑн ҫарпа флота тата ҫӗршыва ҫителӗклӗ таран апат-ҫимӗҫ тӑратма май парӗ. Хатӗрлев органӗсен ҫакна яланах асра тытас пулать.

Д. МИТЬКОВ.

ССР Заготовкӑсен Халӑх Комиссариачӗн Чӑваш АССР-чи уполномоченнӑйӗ.

Колхоз кадрӗсене хатӗрлеме халех тытӑнмалла

ҪӖРПУ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа чылай колхозсенчен ответлӑ работниксем тӑван ҫӗршыва сыхлама Хӗрлӗ Ҫар ретне кайрӗҫ. Фронта кайнӑ ответлӑ работниксем вырӑнне тӗрлӗрен курссенче вӗрентсе ҫӗнӗ кадрсем хатӗрлемелле.

Халь ҫеҫ организациленнӗ счетоводсен, ветфельдшерсен, овощеводсен, полеводсен, животноводсен тата тимӗрҫӗсен курсӗсене районри колхозсен 72 ҫын ямалла пулнӑ. Анчах чылай колхозсем, кадрсем хатӗрлес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ пирки, палӑртнӑ курссене ҫынсем тупса яман. Курссенче паянхи куна мӗн пурӗ те 37 ҫын ҫеҫ вӗренет. Ҫавӑн пекех колхоз счетоводӗсене производствӑран уйӑрмасӑр вӗрентесси те юлса пырать. Районри ҫӗрӗҫ пайӗ производствӑран уйӑрмасӑр 113 счетовод вӗрентсе хатӗрлеме палӑртнӑ. Счетоводсене вӗрентме 18 пункт уҫмалла. Пунктсем валли квалификациллӗ бухгалтер-инструкторсене тупса ҫитернӗ. Анчах та ку тарана ҫитсе те вӗренӗве пуҫӑнман.

Колхоз кадрӗсене хатӗрлесси—ответлӑ та кирлӗ ӗҫ. Колхоз кадрӗсене хатӗрлеме халех тытӑнмалла.

Г. ПЕТРОВ.

Тракторсен запаслӑ пайӗсене вырӑнтах тӑваҫҫӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Кӑҫал машинно-тракторнӑй станци иртнӗ ҫултинчен чылай лайӑхрах ӗҫлерӗ. Уйрӑм трактористсемпе комбайнерсем хӑйсен нормисене ик-виҫ хут ирттерсе тултарчӗҫ. Капитонов бригади хӑйӗн планне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗ. Коновалов юлташ тракторпа ӗҫлемелли плана 306 процент тултарчӗ, 174 килограмм горючи перекетленӗ. Можаев тракторист плана 106 процент ытларах тултарса, 54 килограмм горючи перекетленӗ.

Машинно-тракторнӑй станци кӑҫал тырпула комбайнпа пуҫтарса кӗмелли плана 455 процент тултарнӑ. Дубов комбайнер тырпула пуҫтарса кӗмелли плана 600 процент, И. Уруслов комбайнер 580 процент, Б. Буланков комбайнер 520 процент пурнӑҫа кӗртнӗ. Машинно-тракторнӑй станцинче плана тултарайман пӗр комбайнер та ҫук.

Кӑҫал МТС ҫӗнӗрен кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе те начар мар ӗҫлерӗ. Трактористсемпе комбайнерсен курсӗнчен 39 ҫын, вӑл шутран 37 хӗрарӑм вӗрентсе кӑларнӑ. Курсран вӗренсе тухнӑ трактористсемпе комбайнерсем паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлерӗҫ. Романова, Малышева, Абукина юлташсем малтанхи ҫулах хӑйсен пултарулӑхӗсене кӑтартса пачӗҫ.

Халӗ чылай колхозсенче сложнӑй молотилкӑсемпе авӑн ҫапаҫҫӗ. Авӑн ҫапнӑ ҫӗрте Чернов, Никитин машиноведсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса пынипе пӗр вӑхӑтрах, МТС тракторсемпе ытти машинӑсене юсама вӑхӑтра хатӗрленчӗ. Октябрь уявӗ тӗлне пурӗ 7 трактор юсаса кӑларнӑ. Рабочисем мастерскойра тракторсен запаслӑ пайӗсене юсаса юрӑхлӑ тӑваҫҫӗ, чылай пайсене хӑйсемех туса хатӗрлеҫҫӗ. Тракторсемпе ытти машинӑсене юсанӑ ҫӗрте Анисимов бригади кӑтартуллӑн ӗҫлет. Жирнов юлташ икӗ станокпа ӗҫлесе хӑйӗн нормине 150-шар процент тултарса пырать.

В. ВИКТОРОВ.

Яланлӑх комиссисем—Советсен ӗҫри чӑн-чӑн помощникӗсем пулса тӑмалла

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче Советсен яланлӑх комиссийӗсем умне пысӑк та ответлӑ задачӑсем тухса тӑчӗҫ. Яланлӑх комиссисен Советсен исполкомӗсене тата вӗсен отделӗсене кулленхи ӗҫре вӑйлӑн пулӑшса пымалла, вӗсен Советсен сессийӗсен решенисене, правительство йышӑннӑ законсене пурнӑҫа кӗртсе пыма пулӑшмалла. Ӗҫҫыннисен, уйрӑмах Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ ҫынсен ҫемьисен интересӗсене сыхлас тӗлӗшпе яланлӑх комиссисен ӗлӗкхинчен чылай тӑрӑшарах ӗҫлемелле.

Хӑйсем умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑнине советсен яланлӑх комиссийӗсем пурте мар туйаҫҫӗ-ха. Нумай пулмасть Ишлей райсовечӗн черетлӗ вуннӑмӗш сессийӗ пулса иртрӗ. Ҫав сесси советсен яланлӑх комиссийӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ӗҫӗсен хӑшпӗр итогӗсене пӑхса тухрӗ. Сессире район Совечӗн яланлӑх комиссийӗсем пур те ҫителӗксӗр ӗҫлени палӑрчӗ. Ишлей районӗнче ялсоветсен яланлӑх комиссийӗсем те начар ӗҫлеҫҫӗ. Василькасси тата Кшавӑш ялсовечӗсен яланлӑх комиссийӗсен ӗҫне тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн вӗсен ӗҫ планӗсем ҫукки, ларӑвӗсем пулманни, вӗсем хӑйсем тӗллӗн пуҫарса исполкомра пӗр ыйту та лартманни палӑрнӑ.

Оборона ӗҫӗн яланлӑх комиссийӗсене илер. Вӗсем нумайӗшӗ пурне те ҫар ӗҫне вӗрентес ӗҫ ҫине сахал ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Военнообязаннӑйсене заняти кунӗсенче урӑх ӗҫе янисем те пулкаланӑ. Сектер ялсовечӗ красноармеецсен ҫемьисем пирки ҫителӗклӗ тӑрӑшмасть: пособисем парас ӗҫпе ӗҫлекен районри комиссине списоксене вӑхӑтра тӑратмасть.

Ялхуҫалӑх тӗлӗшпе ӗҫлекен яланлӑх комиссисен умӗнче те пысӑк та ответлӑ ӗҫсем сахал мар. Районра кӑҫал тырпул лайӑх пулчӗ, анчах ӑна пухса кӗртесси вӑраххӑн пулса пычӗ. Ку ӗнтӗ колхозниксене лайӑх ӗҫленӗшӗн хушса тӳлесси ҫинчен ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ кӑларнӑ постановленине нумай колхозсенче ҫителӗксӗр пурнӑҫа кӗртсе пынӑ пирки пулнӑ. Уйрӑм колхозсенче учет ӗҫӗ те япӑх тӑрать. «Искра» колхозра пӗр уйӑх хушши колхозниксен ӗҫкунӗсене шута илсе пыман.

Районра авӑн ҫапасси вӑраха кайрӗ. Колхоз председателӗсем нумайӗшӗ тырра авансем туса типӗтсе ҫапсан ӗҫ ӑнӑҫлӑн пырассине лайӑх пӗлеҫҫӗ. Анчах ҫакна тумаҫҫӗ, калаҫнипех вӑхӑт иртсе пырать.

Ҫак районри колхозсен правленийӗсем чылайӗшӗ государствӑна пама пахча-ҫимӗҫсене типӗтес ӗҫ ҫине сӳреккӗн пӑхаҫҫӗ. «Социализм», «Родина», «1 августа», «Красный борец», «Хӗрлӗ флот», «Хӗрлӗ явӑш» колхозсем халиччен те пахча-ҫимӗҫ типӗтме тытӑнман. Ку колхозсенче государствӑна ытти продуктсем парас ӗҫ те сӳреккӗн пулса пырать.

Ҫакӑнта асӑннӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса пыма райсоветсен тата ялсоветсен исполкомӗсене ялхуҫалӑх тӗлӗшпе ӗҫлекен яланлӑх комиссисем пулӑшмалла. Анчах вӗсем ӗҫре пулӑшса пыни ҫук-ха.

Вырӑнти промышленность туса кӑларакан таварсемпе тата пурне те кирлӗ таварсемпе суту-илӳ тӑвассине суту-илӳ организацийӗсем тивӗҫлӗ хак памаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне тата района валли уйӑрса панӑ таварсене пурне те турттарса пыма тӑрӑшни ҫук.

Райсоветӑн суту-илӳ тӗлӗшпе ӗҫлекен яланлӑх комиссийӗ (председателӗ Семенов юлташ) ҫак ыйтусене исполком умне лартма, таварсене турттарса килессине йӗркелесе яма пултарнӑ, анчах вӑл ҫавна туман.

Шкул ӗҫӗн яланлӑх комиссийӗсем кирлӗ пек ӗҫлесе тӑрсан, нумай усӑ пама пултараҫҫӗ. Анчах вӗсем ялсовечӗсемпе шкул директорӗсене сахал пулӑшаҫҫӗ. Шкула ҫӳреме тивӗҫлӗ 242 ача шкулта вӗренмеҫҫӗ. Уйрӑмах Чандӑр, Ҫӳлтикасси, Мӑнал шкулӗсене ачасем сахал ҫӳреҫҫӗ. Хӑшпӗр ялсовечӗсемпе колхозсем тӑлӑх ачасене тата Хӗрлӗ Ҫара кайнисен ачисене шкула ҫӳреме пулӑшу памаҫҫӗ. Ачасене вӗрентес ӗҫре ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем пулсан та, вӗсене пӗтерес тӗлӗшпе шкул ӗҫӗн яланлӑх комиссийӗсем тӑрӑшмаҫҫӗ.

Сывлӑх сыхлав ӗҫӗнче те ҫитменлӗхсем нумай. Анчах ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ комиссисем начар ӗҫлеҫҫӗ. Сӑмахран, 1941 ҫулта районра 5 мунча тума палӑртнӑ пулнӑ, ҫапах та решени хут ҫинчех тӑрса юлнӑ. Ялсоветсен благоустройство комиссийӗсем ҫак ӗҫе тивӗҫлипе хак паман.

Бюджет комиссийӗсемпе те ӗҫ темӗн чухлех тупӑннӑ пулӗччӗ. Укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе районра виҫҫӗмӗш кварталти плана тултарман, тӑваттӑмӗш кварталти плана тултарасси те ҫителӗксӗр пулса пырать.

Райсоветӑн вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен яланлӑх комиссийӗ (председателӗ Антонов юлташ) армансене ӗҫе юсаса ярас пирки нимӗн те туман.

Райсоветӑн яланлӑх комиссийӗсен председателӗсем хӑйсем ҫителӗксӗр ӗҫленине урӑх ӗҫсем нумай пулни ҫине сулса яраҫҫӗ. Чӑнах та вӗсем пӗр вӑхӑтрах райисполком отделӗсен пуҫлӑхӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫапах та вӗсем яланлӑх комиссисен ӗҫӗсене йӗркелесе яма тата ертсе пыма тӑрӑшманнине нимӗнпе те тӳрре кӑларма ҫук. Комиссисен составӗнче районри совет депутачӗсем тӑраҫҫӗ. Кашни председатель ҫав депутатсем тата актив пулӑшнипе комисси ӗҫне лайӑх организацилеме пултарать. Анчах комиссисен ӗҫне актива хутшӑнтарас тӗлӗшпе вӗсем ним те тумаҫҫӗ.

Уйрӑм комиссисен председателӗсем хӑйсен обязанноҫӗсене паянччен те ӑнланса илеймен. Сӑмахран, райсоветӑн ялхуҫалӑх комиссийӗ виҫҫӗмӗш кварталра тумалли ӗҫсен планӗнче пур колхозсенче те пӗрле апатланмалла тӑвассине, тырпула кӗске срокра пуҫтарса кӗртессине, фермӑсене организацилессине тата ытти ыйтусене те кӗртсе ҫырса хунӑ. Ҫакӑ тӗрӗс мар. Мӗншӗн тесен яланлӑх комиссисен ҫак ӗҫсене хӑйӗн ҫине илмелле мар, ҫав ӗҫсене районри ҫӗрӗҫ отделӗн туса пымалла. Ҫӗрӗҫ отделӗ ҫав ӗҫсене мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине комисси тӗрӗслесе тӑмалла, ҫитменлӗхсем пулсан, вӗсене вӑхӑтра пӗтерес тӗлӗшпе райсовет исполкомӗ умӗнче ыйтусем лартмалла.

Ишлей райсоветӗн сессийӗ яланлӑх комиссисен ӗҫӗсем пирки сӳтсе-явса тӗрӗс ӗҫ турӗ. Ҫав комиссисен пӗр вӑраха ямасӑрах хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек ҫӗнетсе урӑхлатса ҫитермелле, ҫӗнӗ майпа ӗҫлесе пымалла, райсовет сессийӗн решенисене вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи законсене райсовет исполкомӗпе унӑн отделӗсем, ытти организацисемпе учреждениесем пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пынине пӗрмаях тӗрӗслесе тӑмалла.

Ӗҫҫыннисене ҫар ӗҫне вӗрентесси питех те кирлӗ ӗҫ пулса тӑнине шута илсе, райсовет сессийӗ пур ялсоветсем ҫумӗнче те оборона комиссийӗсем тума йышӑнчӗ тата ҫар ӗҫне пурне те обязательнӑй йӗркепе вӗрентес ӗҫре командный состава пулӑшу парса пыма хушрӗ.

Сесси райсовет исполкомне яланлӑх комиссисем тӑратнӑ ыйтусене вӑхӑтра сӳтсе-явма, ӗҫре вӗсен пуҫарулӑхӗпе анлӑн усӑ курма, комиссисен активлӑ членӗсене пулӑшса пыма хушрӗ. Райсовет исполкомӗн уйрӑмах ялсоветсенчи яланлӑх комиссисене ытларах пулӑшас пулать. Вӗсен ӗҫне вӑйлатса ярас тӗлӗшпе уйрӑм комиссисен председателӗсене вӑхӑтран вӑхӑта пухса, отраслевой канашлусем ирттермелле. Ҫав канашлусене ирттерме лайӑх хатӗрленмелле. Ялсоветсене пулӑшма исполком работникӗсене, райсовет депутачӗсене вырӑнсене ямалла.

Ишлей районӗнче кӑна мар, пирӗн республикӑри ытти районсенче те советсен яланлӑх комиссийӗсен ӗҫне вӑйлатма тӑрӑшмалла. Вӗсем советсен чӑн-чӑн помощникӗсем пулса тӑччӑр.

И. АНАНОВ.

Колхозри стена хаҫачӗ

Ишекри Сталин ячӗпе тӑракан колхозри профсоюзпа комсомол организацин кашни уйӑхрах «Сталинец» ятлӑ стена хаҫачӗ туса тӑрать. Хаҫат ӗҫне ялти ҫамрӑксемпе комсомолецсем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра хаҫат паянхи кун ыйтӑвӗсене лайӑх ҫутатса пырать. Уйрӑмӑнах авӑн ҫапса пӗтерсе тырпула тирпейлӗн пуҫтарса кӗртесси ҫинчен, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсене пулӑшасси ҫинчен, ҫар ӗҫне тӑрӑшса вӗренесси ҫинчен ҫырса, укҫа-тенкӗ тата ытти обязательствӑсене те вӑхӑтра паракан колхозниксем ҫинчен ҫырса ыттисене ӗҫлеме вӗрентет. Хаҫат илемлӗ те тирпейлӗ тухать. Художник Макаров, В. Курбатов, Н. Илюхин юлташсем хаҫата тӑрӑшса кӑлараҫҫӗ.

З. М.

Японипе Америка хушшинчи калаҫусем пирки

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫатӑн Вашингтонри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Хэлл ҫӗнӗвӗсем тӗлӗшпе Курусу Япони правительствин ответне панӑ. Ку ответран Хэлл ҫӗнӗвне Япония йышӑннине те, йышӑнманнине те курӑнмасть. Корреспондент ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Японипе Америка хушшинчи калаҫусене малалла пыма чаракан тӗп чӑрмав вӑл — Япония виҫӗ держава союзӗнче тӑни пулать. Япония хӑшпӗр ыйтусем тӗлӗшпе каялла чакма та хатӗр. Анчах мӗнле ыйтусем тӗлӗшпе пакасшӑнни халлӗхе паллӑ мар-ха. Ҫавах та ҫапла шутлаҫҫӗ: Америка суту-илӳ тума чаракан йӗркесене кӑшт ҫемҫетсен, Япония хӑйӗн малашнехи агрессиллӗ шухӑшӗсене пӑрахма килӗшет пулӗ, теҫҫӗ. Корреспондент шучӗпе, Япония Хэлл сӗнӗвӗсен хӑшпӗр пункчӗсене ҫеҫ йышӑнни Америкӑна лӑплантарма пултарас ҫук.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Вашингтонри корреспонденчӗ ҫырнӑ тӑрӑх, Тодзио ноябрӗн 17-мӗшӗнче Японин парламентӗнче тухса каланӑ сӑмаха Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Японипе пыракан калаҫусен никӗсӗ вырӑнне те йышӑнма килӗшменни ҫинчен Рузвельтпа Хэлл Курусуна пӗлтернӗ пулмалла, теҫҫӗ. Япония виҫӗ держава союзӗн членӗнчех юлать пулсассӑн, Америкӑн государственнӑй департаменчӗ Лӑпкӑ океан ҫинчи лару-тӑрӑва пӗтӗмӗшпех йӗркелес ыйтусене сӳтсе явма та килӗшесшӗн мар пулмалла. Корреспондент каланӑ тӑрӑх, Америка правительствин представителӗсем халӗ ӗнтӗ ытларах та ытларах ҫапла шутлама пуҫлаҫҫӗ: Курусу Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсене калаҫу тума ҫеҫ мар, ҫакӑнпа пӗрлех вӑл Америка Японипе вӑрҫма мӗн чухлӗ хатӗррине сӑнаса пӗлес сӑлтавпа та пынӑ иккен, теҫҫӗ. Правительство таврашӗнче шутланӑ тӑрӑх, Курусу Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем вӑрҫа хатӗр тӑнине ӗненнӗ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк» таймс» хаҫатӑн обозревателӗ Крок Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен позицийӗсем юлашки вӑхӑтра чылаях улшӑнчӗҫ, ҫав позицисем вӑйланса кайрӗҫ, тесе Токиона асӑрхаттарать. Халиччен экспертсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Филиппинсене хӳтӗлеме пултараймаҫҫӗ тесе шутланӑ. Хальхи вӑхӑтра, Англипе Америка тинӗс ҫинче пӗр-пӗрне пулӑшса тӑнӑ чухне тата Филиппинсем ҫине Америка бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсене илсе пырса тӑратнӑ май, Пӗрлешӳллӗ Штатсем Филиппинсене хӳтӗлеме кӑна мар, Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи агрессие хирӗҫ операцисем тума та пултараҫҫӗ, тесе ҫырать обозреватель.

Филиппинсен ҫарӗ Америка ҫарӗсем ҫумне хутшӑнать

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Манилӑран (Филиппины утравӗсен столици) илнӗ хыпар тӑрӑх, Америка хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен командованийӗ — ноябрӗн 24-мӗшӗнче американецсен ҫарӗ ҫумне Филиппинсен офицерӗсемпе салтакӗсем 20 пин ҫын — пурӗ 8 пехотнӑй тата 6 артиллери полкӗсем хутшӑнасси ҫинчен пӗлтернӗ. Филиппинсен ҫарӗн 10 дивизине хальхи вӑхӑтра организацилесе ҫитерни пекех шутлаҫҫӗ.

Англичансене Китайран куҫарни

ТОКИО, ноябрӗн 23-мӗш. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин Японири подданнӑйӗсене эвакуаци туса тиенӗ Китайри навигаци компанин «Аньхуэй» пароходӗ ноябрӗн 27-мӗшӗнче Шанхая ҫитни ҫинчен Англи посольстви официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ. Унта вӑл эвакуаци тунӑ англичансене 1.175 ҫынна илет. Унтан пароход Ҫурҫӗр Китайри англичансене эвакуаци тума ҫурҫӗрелле тухать, тесе палӑртаҫҫӗ.

Таи правительстви Япони влаҫӗсене протест панӑ

ЛОНДОН, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Бангкок хаҫачӗсем Индо-Китай енчен самолетсем тата боецсем Таи чиккисене пӑсни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Ноябрӗн 17-мӗшӗнче паллӑ мар национальноҫӑн самолечӗ Таин кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ чикки енче, стратеги тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан чугунҫул районӗнче Аран-Прадет тӑрринчен вӗҫсе иртсе кайнӑ. Ноябрӗн 18-мӗшӗнче Францин икӗ самолечӗ Таин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ чиккинче Монгкай районӗнче 10 минута хушши разведка туса ҫӳренӗ. Индо-Китайӑн 10 салтакран тӑракан отрячӗ Нотхай районӗнче Меконг юханшыв урлӑ каҫса, ялсенчен пӗрине кӗрсе вырнаҫнӑ. Хирӗҫ тӑнине тӗл пулса, отряд каялла чакнӑ тата Таин пӗр салтакне тыткӑна илнӗ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Таи правительстви Индо-Китай чиккинче пулса иртнӗ инцидент ҫинчен, ҫавна май Таин икӗ самолечӗ сиенленни ҫинчен тата икӗ летчик вилни ҫинчен Япони влаҫӗсене официальнӑй йӗркепе мар протест панӑ.

Мексикӑра Итали ирӗклӗхӗшӗн кӗрешекен союз организациленнӗ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Америка хаҫачӗсем ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Мексикӑра пурӑнакан итальянец ӗҫсыннисем Итали ирӗклӗхӗшӗн кӗрешмешкӗн Гарибальди ячӗпе пӗтӗм тӗнчери итальянецсен союзне организациленӗ.

Ҫӗнӗ организаци манифест кӑларнӑ. Ку манифестра вӑл нацизма хирӗҫ кӗрешме Совет Союзне пур майсемпе те пулӑшма сӑмах панӑ. Мексикӑри прогрессивнӑй паллӑ деятельсенчен чылайӗшӗ хӑйсем енчен ҫак организацие пулӑшса тӑрасси ҫинчен пӗлтернӗ. Вӗсем хушшинче латин Америкинчи рабочисен конфедерацин руководителӗ Ломбардо Толедано тата ыт. те пур.

Вейгана ӗҫрен кӑларни

ЛОНДОН, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Виширен пӗлтернӗ тӑрӑх, генерал Вейган отставкӑна тухни ҫинчен официальнӑй йӗркепе пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Вейган йышӑнса тӑнӑ Франци правительствин Ҫурҫӗр Африкӑри генеральнӑй комиссарӗн постне пӗтернӗ, ун вырӑнне Франци Африкин ӗҫӗсем тӗлӗшпе ӗҫлеме яланлӑх генеральнӑй секретарӑн постне тунӑ. Ҫав поста Вейганӑн чи ҫывӑх сотрудникне вице-адмирала Сенара лартнӑ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 21-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: лайӑх пӗлсе тӑракан ҫынсенчен илнӗ сведенисем тӑрӑх, Вейгана вӑл Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе туслӑн ҫыхӑнса ӗҫлеме килӗшӳллӗ пулнӑшӑн тата Германипе ҫыхӑнса тӑрассине хирӗҫ тухса каланӑшӑн кӑларнӑ. Вейган Ҫурҫӗр Африкӑна Германи енчен контроль туса тӑрассине хирӗҫ пулнӑ.

Вейган отставкӑна тухни ҫинчен ютҫӗршывсенче мӗн ҫыраҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫатӑн Лондонри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, нейтральнӑй ҫӗршывсенче сӑнаса тӑракансем хушшинче ҫапла калаҫҫӗ: Англи войскисем Германи войскисенчен вӑйлӑрах пулнӑ пирки Германин Ливири войскисене Франци Тунисне е Мароккона чакма май парас тесе Вейгана ӗҫрен кӑларнӑ, теҫҫӗ.

СТОКГОЛЬМ, ноябрӗн 23-мӗш. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаҫат хӑйӗн умстатьинче ҫапла ҫырать: Вейган отставкӑна тухни Англия Ливире наступлени пуҫланипе пӗр вӑхӑтра пулчӗ. Англичансем Ливие тытса илни Италишӗн пысӑк хӑрушлӑх кӑларса тӑратнӑ пулӗччӗ, Англи аэродромӗсене Сицили патне ҫывхартни Кӑнтӑр Италин хулисене хӑратса тӑнӑ пулӗччӗ. Ҫак событисемпе пӗр вӑхӑтрах Вейган отставкӑна тухни паллӑ пулчӗ. Тӗплӗ хыпарсем тӑрӑх, Вейган Германипе туслӑ пулассине хирӗҫ, Вейган пуҫ пулса тӑнӑ Францин колонийӗсене Германия хапсӑннине хирӗҫ тӑнӑ. Вейгана ҫав влаҫран хӑтарни Виши правительстви Германипе пӗр майлӑ пулнине кӑтартса парать.

Германия Бизертӑри базӑсене ыйтать

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 23-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Бернри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ютҫӗршывсенчи дипломатиллӗ ҫынсем хушшинче Германия Францирен Бизертӑри тинӗс-ҫар базисене ыйтни ҫинчен калаҫаҫҫӗ. Нумаях пулмасть нимӗҫсем Бизерта урлӑ таварсем турттарма право ыйтни паллӑ пулнӑ.

Нимӗҫ генералӗ вилни

БЕРН, ноябрӗн 23-мӗш. (ТАСС). Германи информаци бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ноябрӗн 20-мӗшӗнче Хӗвелтухӑҫ фронтӗнчи ҫапӑҫусенче армейски корпусӑн командирӗ генерал фон Бризен вилнӗ.

Нимӗҫсен паллӑ летчикӗ вилнӗ

ЖЕНЕВА, ноябрӗн 23-мӗш. (ТАСС). Германин официальнӑй даннӑйӗ тӑрӑх, вӗҫнӗ вӑхӑтра нимӗҫсен паллӑ летчикӗ-истребителӗ Мельдерс вилнӗ.

Геббельсӑн ҫухӑрашуллӑ статьи

ЖЕНЕВА, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Фашистла Германин пурнӑҫӗ йывӑрланса ҫитни фашистсен лидерӗсем тухса каланӑ сӑмахсенчен те тата вӗсем пичетре кӑларнӑ статьисенчен лайӑх курӑнать. Геббельс «Дас рейх» хаҫатра статья пичетлесе кӑларнӑ, ҫав статья фашистсен пуҫлӑхӗсем шикленсе кӑшкӑрашма тытӑннине кӑтартса парать.

Геббельс хӑйӗн статьинче, чи малтан, вӑрҫӑпа ывӑнса ҫитнине пула мир кӗтекен Германи халӑхне: — Германин йывӑр лару-тӑруран тухмалли пӗртен-пӗр ҫулӗ — хальхи вӑрҫа малалла тӑсасси пулса тӑрать, пӗр ҫакӑ ҫеҫ Германие ҫӑлма пултарать, тесе ӗнентерме тӑрӑшать. «Пирӗн урӑх нисталла та кайма ҫук,—тесе кӑшкӑрашать Германин пропаганда министрӗ.—Тытӑннӑ ӗҫрен эпир нимӗн те улӑштарма, ни ӳлӗме хӑварма пултараймастпӑр», тет.

Геббельс Германи халӑхне поражени тӳсмелле пулассипе хӑратать: «Вӑрҫӑра парӑнсан, эпир пурне те ҫухататпӑр. Поражени тӳсни пире пурне те пӗтерсе хурать»,—тет вӑл.

Анчах та нацистсен министрне кун пек хӑратни те ҫителӗклӗ мар пек туйӑнать. Халӑха хӑратас тӗлӗшпе вӑл татах та тӗксӗмрех малашлӑхсем туса кӑтартса, Германи тӑшманӗсем нимӗҫ халӑхӗ ӳссе пырассине чарса лартма шухӑшлани ҫинчен, «60 ҫултан кӗҫӗн арҫынсене пурне те ирӗксӗрлесех стерилизаци тума шутлани» ҫинчен ҫырать.

Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫнине пула Германи хуҫалӑхӗ йывӑрланса ҫитни ҫинчен Геббельс вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа малтанхи хут ҫырать. Германин 1941 ҫулти пурнӑҫне 1939 ҫултипе танлаштарса пӑхса, Геббельс: «1939 ҫулти задачӑсене хальхи кампанин гигантла задачисемпе танлаштарсан, вӗсем ун чухне ҫав тери пӗчӗкҫӗ пулнӑ», тесе ҫырать.

Ҫакӑн пекех Геббельс нимӗҫ халӑхӗ халиччен курман йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнине те малтанхи хут йышӑнать. Анчах та кунта фашистсен тытамаклӑ кӑшкӑравҫи нимӗҫсене ытти ҫӗрсенчи, Германи тустарса чуралантарнӑ ҫӗршывсенчи, халӑхсем татах та начартарах пурнӑҫпа пурӑнни ҫинчен каласа парса лӑплантарма тӑрӑшать. «Вӑрҫӑ пирӗнтен пурсӑмӑртан та пысӑк йывӑрлӑха тӳсме ыйтать,—тесе ҫырать вӑл,— анчах та парӑннӑ халӑхсем пирӗнтен те ытларах йывӑрлӑхсене тӳсеҫҫӗ. Ҫак вӑрҫӑра поражени тӳсес пулсан, пире поражени хыҫҫӑн кӗтсе тӑракан хӑрушӑ йывӑрлӑхсем умӗнче эпир халиччен тӳснисем вӗсем нимӗн те мар».

Германи халӑхӗ пикенсех: «Хӑҫан чарӑнӗ-ши вӑрҫӑ?» текен ыйту лартнине кура, Геббельс ҫак ыйтуран «хӑҫан чарӑнӗ-ши ку вӑрҫӑ? текен ыйту париччен, — мӗнле вӗҫленӗ-ши ку вӑрҫӑ? тесе ыйтни ӑсларах та, вырӑнларах та пулать» тесе иртсе кайма тӑрӑшать.

Венгрире саботажлӑ ӗҫсем ӳсеҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 22-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Стамбулри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Венгрире юлашки вӑхӑтра саботажла ӗҫсем палӑрмаллах ӳснӗ. Ҫакӑн пек саботаж тунипе пысӑк промышленноҫлӑ предприятисем те стройран тухкаланӑ. Тӗслӗхе илсен, пысӑк хими завочӗ ҫунса кайнӑ тата Венгрири пӗртен-пӗр каучук завочӗ те ӗҫлеме чарӑннӑ. Будапештра пир-авӑр тӗртекен темиҫе предприяти ҫуннӑ. Ҫавӑн пекех тата Вертейнри пысӑк элеваторпа Пештри пӗр паллӑ завод та ҫунса кайнӑ.

Сербири партизанла вӑрҫӑ

ЛОНДОН, ноябрӗн 23-мӗш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаҫат Югославире партизансемпе Германи войскисем хушшинче пысӑк тытӑҫусем пулса пыни ҫинчен пӗлтерет. Германи войскисем Недичӑн карательнӑй чаҫӗсене пулӑшаҫҫӗ. Ҫапӑҫусем Югославин тӗрлӗ пункчӗсенче пыраҫҫӗ. Нимӗҫ войскисене пулӑшма нумаях пулмасть Болгарирен, Венгрирен тата Румынирен ҫӗнӗ вӑйсем пынӑ.

Ҫавӑн пекех хаҫат нимӗҫсем Серби заложникӗсене массӑллӑн вӗлерсе пыни ҫинчен те пӗлтерет. Крагуевацра 70 ҫынна ҫакса вӗлернӗ. Унта студентсем ҫуртсен стенисем ҫине «Сывӑ пултӑр Совет Союзӗ!» тесе ҫырнӑ пулнӑ.

Грецири лару-тӑру

Турци пичечӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Грецири кашни пысӑк хулара выҫӑпа кунсерен 60 ҫынна ҫити вилет. Ҫынсем урамрах ӳкеҫҫӗ. Ҫӗршывра тӗрлӗрен чир-чӗрсем вӑйлӑн сарӑлнӑ. Ҫамрӑк ачасем ҫимелли тупас тесе ӑпӑр-тапӑрсем тӑкакан ещӗксенче чакаланаҫҫӗ. Укҫа хӑйӗн хакне ҫухатнӑ, унпа нимӗн те туянма ҫук. Грецири халӑхӑн мӗнпур сийӗсем, ҫав шутрах интеллигенципе духовенство та Германипе Итали оккупанчӗсене хирӗҫ уҫҫӑнах кӗрешеҫҫӗ. (ТАСС).

Данире пурнӑҫ йывӑрланса ҫитни

Данин оперативнӑй «Тиденде» хаҫачӗ ҫӗршыв экономики ҫинчен официальнӑй йӗркепе пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав пӗлтерӳре Германия Данирен пысӑк хисеппе ялхуҫалӑх продукчӗсене, уйрӑмах, ҫу, сысна ашӗ, мӑйракаллӑ шултра выльӑх тата Хӗвелтухӑҫ фронтне яма лашасем ыйтни ҫинчен каланӑ. Кунсӑр пуҫне Германия курӑксемпе пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсен хӑшпӗр сорчӗсене ыйтать. Данире продовольстви енӗпе пысӑк йывӑрлӑхсем тухса тӑнӑ. Пахча-ҫимӗҫсем тата ҫу таврашӗсем ҫитмеҫҫӗ.

Сыснасен тата хуҫалӑхри кайӑк-кӗшӗксен хисепӗ, вӑрҫӑчченхи вӑхӑтпа танлаштарсан, сахалтан та 50 процент чакнӑ, мӑйракаллӑ шултра выльӑхсен шучӗ чаксах пырать. (ТАСС).

Нимӗҫсем Норвегие ҫаратни

Германин ҫар влаҫӗсем Норвегире мӗнпур ҫӗрулмин 30 процентне ытла реквизици тунӑ. Хресченсене Германин оккупациллӗ ҫарӗ валли ноябрь уйӑхӗнче пит нумай аш-какай тӑратма хушнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех хресченсене хӑйсене валли выльӑх-чӗрлӗх пусма ҫирӗппӗн чарнӑ.

Ҫапла ҫаратса илнӗ продовольствипе таварсен чи пысӑк пайне нимӗҫсем Германие илсе каяҫҫӗ. Ҫак ҫулӑн пӗрремӗш ҫурринче оккупантсем 5.108 пин килограмм сӗт, 1.166 пин килограмм чӑкӑт, пӗлтӗрхи ҫулӑн иккӗмӗш ҫурринче—2.117 пин килограмм кофе, 5.819 пин килограмм ҫу, 6.382 пин килограмм какай, нумай пулӑ, ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫсем т. ыт. те Германие турттарса кайнӑ. Ҫавӑн пекех нимӗҫ фашисчӗсем хӑйсен ҫарӗ валли Норвегири ҫӑмӑ, тирсене тата атӑ-пушмаксене мӗнпурне пӗтӗмпех тенӗ пекех реквизици тунӑ, е Норвегирен Германие кӑларса кайнӑ.

ЮТҪӖРШЫВСЕНЧИ ХРОНИКА

▲ Ноябрӗн 21-мӗшӗнчен пуҫласа Англире 15 процентран ытларах ҫӑм кӗнӗ пир-авӑрсемпе одеялсен экспортне чарса лартнӑ.

▲ Индо-Китайра «ҫӗнӗ йӗрке» тӑвас ӗҫе хутшӑнманшӑн Францин 150 чиновникне государство службинчен кӑларнӑ. Вӗсене пурне те концентрациллӗ лагерьсене янӑ.

▲ Лос-Анжелосра (Калифорния) митинг пулса иртнӗ. Ҫав митингра 7 пин ҫын пулнӑ. Митинг участникӗсем Сталин юлташ патне саламлӑ телеграмма янӑ. Телеграммӑра вӗсем Совет Союзне «самолетсем, танксем, суднӑсем тата ытти тӗрлӗ ҫар материалӗсем» ярса пама пулнӑ.

▲ Англие Канада войскисен ҫӗнӗ контингенчӗ пырса ҫитнӗ, вӗсен хушшинче темиҫе ҫӗр летчик, артиллеристсем тата ытти йышши войскӑсем пур.

▲ Ҫитес виҫӗ уйӑх хушшинче Америка ҫарӗ сакӑр урапаллӑ тягач туянать. Ҫав тягач противотанковӑй тупа туртса сехетре 80 миль кайма пултарать. Тягача питӗ хулӑм хурҫӑ броняпа витнӗ.

▲ Ноябрӗн 15-мӗшӗнче Китайри общественность Китайри паллӑ писатель, ученый тата обществӑллӑ деятель Го Мо-жа литература ӗҫӗпе ӗҫлеме пуҫланӑранпа 25 ҫул тултарнине паллӑ турӗ. Юбиляр ячӗпе Китай культурин 168 деятелӗнчен коллективлӑ саламлӑ телеграмма илнӗ.

Шупашкар районӗнчи «Молния» колхоз Хӗрлӗ Ҫар валли пахча ҫимӗҫӗсем типӗтсе пама сушилка лартнӑ. Ӳкерчӗк ҫинче: «Молния» колхоз председателӗ Т. И. Иванов хӑй тутарнӑ сушилка умӗнче тӑрать.

Ястржембский фотоӳкерчӗкӗ.

БИБЛИОГРАФИ

Оборона литературин каталогӗ

Чӑвашсен Государство издательстви ҫак кунсенче оборона кӗнекисен каталогне пичетлесе кӑларчӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Чӑвашгиз пӗтӗмӗшпех тенӗ пек оборона литературине кӑларас ӗҫе пикенчӗ. Илемлӗ литература произведенийӗсене кӑна тӑватӑ уйӑх ҫурӑ хушшинчех хӗрӗх кӗнеке ытла кӑларнӑ. Вӑл шута пуринчен ытла пӗчӗк брошюрӑсем, сборниксем тата фронтри паттӑрсемпе вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен калакан очерксемпе корреспонденцисем кӗреҫҫӗ.

Каталог, издательствӑн кӑҫалхи ӗҫне пӗтӗҫтерсе кӑтартнипе пӗрлех, чӑваш писателӗсемпе поэчӗсен вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑнхи ӗҫӗсене те тишкӗрсе тухма пулӑшать.

Каталогра асӑннӑ кӗнекесенчен ҫуррине ытла вырӑсларан куҫарнӑ е вырӑсла кӑларнӑ (виҫӗ кӗнеке). Чӑвашла оригинальнӑй кӗнекесенчен чылайӗшне граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнчи е отечественнӑй вӑрҫӑчченхи темӑсемпе ҫырнӑ. Ҫапла вара фронтри ӗҫсемпе паянхи тыл ҫинчен калакан оригинальнӑй произведенисем пурӗ те 4—5 кӑна: ҫамрӑк прозаик Степан Алим ҫырнӑ «Разведчик Комков» ятлӑ калав, Н. Айзманӑн «Патриотсем» ятлӑ пӗр актлӑ пьеси, Никита Волковӑн «Парне» ятлӑ повеҫӗ тата М. Ястранӑн ҫӗнӗ сӑввисен кӗнеки. Кунсӑр пуҫне, «Тӑван ҫӗршывшӑн, Аслӑ Сталиншӑн» тата «Ҫӗлен-калтасем» сборниксене асӑнма пулать, вӗсене хатӗрлес ӗҫе 10—12 писатель хутшӑннӑ.

Хӑшпӗр писательсем паянхи кун ыйтӑвӗпе уйрӑм кӗнекесем мар, хаҫат-журналсенче те вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа пӗр йӗрке те ҫырман.

Чӑвашла оригинальнӑй произведенисем сахал тухнинче, пирӗн шутпа, чи малтан издательство хӑй айӑплӑ. Чӑваш писателӗсенчен чылайӗшӗ отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчен пуҫласах фронтра нимӗҫ фашизмне хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ. Анчах издательство вӗсемпе пӗрипе те тенӗ пек ҫыхӑну тытмасть, вӗсем мӗн ҫырнине, мӗн ҫырма ӗмӗтленнине пӗлмест.

Ҫавна пула фронтри паттӑрла ӗҫсем ҫинчен, пирӗн боецсем нимӗҫ фашисчӗсемпе хӑйсен пурнӑҫӗсене шеллемесӗр кӗрешни ҫинчен калакан кӗнеке ку таранччен пурӗ те пӗрре ҫеҫ тухнӑ (Алимӑн «Разведчик Комков» ятлӑ корреспонденцийӗ).

Ӗҫ малашне те кун пекех пырсан, ҫитес ҫулхи планпа та ҫапла пулма пултарать.

Вырӑсларан куҫарнӑ кӗнекесем юлашки вӑхӑтра уйрӑмӑнах аван пахалӑхлӑ тухаҫҫӗ. Вӗсене куҫарма издательство хӑй тавра ӑста куҫаруҫӑсене явӑҫтарнӑ. Ку тӗлӗшрен пуринчен ытла Николай Виртан «Партизансем» ятлӑ очеркне, М. Шолоховӑн «Пулеметчиксен командине», И. Всеволожскин С. М. Буденный ҫинчен ҫырнӑ кӗнекине тата боевой эпизодсен сборникӗсене палӑртса хӑвармалла. Вӗсене пурне те питӗ ӑнланмалла та ҫӑмӑл чӗлхепе куҫарнӑ.

Каталог тӑватӑ пая уйӑрӑлса тӑрать. Илемлӗ литература произведенисемсӗр пуҫне унта обществӑллӑ-политикӑллӑ оборонӑллӑ произведенисем, сывлӑшран тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланас ӗҫе вӗренмелли кӗнекесем, пурне те обязательнӑй йӗркепе ҫар ӗҫне вӗрентнӗ чух усӑ курмалли пособисем кӗнӗ.

Каталог рабочисене, колхозниксене, учительсемпе вӗренекенсене, служащисене, вулав ҫурчӗсенче, хӗрлӗ кӗтессенче, колхоз клубӗсенче ӗҫлекенсене хӑйсен библиотекисене паянхи кун кирлӗ кӗнекесемпе пуянлатма пулӑшать.

Ф. А-в.

И. В. Сталин юлташ докладне 91.000 экземпляр пичетлесе кӑларнӑ

И. В. Сталин юлташ ӗҫҫыннисен депутачӗсен Мускав совечӗпе Мускав хулинчи партиллӗ тата обществӑллӑ организацисен чаплӑ ларӑвӗнче 1941 ҫулти ноябрӗн 6-мӗшӗнче **«Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци 24 ҫул тултарни ҫинчен»** тунӑ доклада Чӑваш АССР Государство Издательстви темиҫе изданипе пичетлесе кӑларчӗ. Ҫак доклад чи малтан плакатпа тухрӗ (вырӑсла 8.500 экз., чӑвашла 7.500 экз.). Ҫав вӑхӑтрах тата уйрӑм кӗнекепе виҫӗ хут пичетленсе тухрӗ. Вӗсенчен иккӗшӗ вырӑсла (пӗтӗмпе 35.000 экз.), пӗри чӑвашла (10.000 экз.). Кусемсӗр пуҫне, ҫак кунсенче татах 30.000 экземпляр пичетленсе тухмалла. Ӑна ӗнтӗ пичетлеме тытӑннӑ.

И. В. Сталин юлташӑн докладне вулакансем патне кӗске вӑхӑтрах ҫитерес тӗлӗшпе Пичет Союзӗ уйрӑмӑнах тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Пӗтӗмпе вӑл 41.000 экземпляр салатрӗ. Когиз хӑйӗн магазинӗсем урлӑ 20.000 экз. салатрӗ.

И. В. Сталин юлташӑн чаплӑран та чаплӑ докладне пирӗн ӗҫҫыннисем татах ыйтаҫҫӗ, вӗсем ӑна тӗплӗнрех вуласа, тӗплӗнрех ӑнланса илесшӗн. Ҫак доклад—Совет Союзӗн программи пулса тӑракан чаплӑ документ—пирӗн чӑваш халӑхӗ хушшинче ҫавӑн пек пысӑк тиражпа саланни, чи малтан, ҫакӑн ҫинчен калать: пирӗн пӗтӗм республика, пирӗн пӗтӗм халӑх нимӗҫ захватчикӗсене тӗп тӑвас ӗмӗтпе пурӑнать. Вӑл ҫакна ӑнланса тӑрать: **«Паянтан пирӗн задача, ССР Союзӗнчи халӑхсен задачи, пирӗн ҫарпа пирӗн флотри боецсен, командирсемпе политработниксен задачи—пирӗн тӑван ҫӗршыв территорийӗ ҫине, ӑна оккупацилекенсем пулса, сӑмсӑрленсе кӗнӗ нимӗҫсене пурне те, пӗр ҫын юлмиччен, пӗтерсе тӑкасси пулса тӑрать»** (И. В. Сталин).

В. Д-в.

Паттӑрсем ҫинчен

Отечественнӑй вӑрҫӑн фрончӗсенче нимӗҫ фашизмне хирӗҫ вырӑссемпе, украинецсемпе, белоруссемпе, грузинсемпе, узбексемпе пӗрле чӑваш халӑхӗн паттӑр ывӑлӗсем те ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа чылай чаплӑ ятсем палӑрчӗҫ. Ҫавсем ҫинчен калать те ӗнтӗ халӗ чӑвашсен Государство Издательстви пичете пама хатӗрлесе ҫитернӗ «Паттӑрсем» ятлӑ сборник. Унта С. Трегубӑн старший политрук Павлов ҫинчен калакан очеркӗ, военврач И. Столяров, В. Туртуш, С. Макаров, Ал. Морсков т. ыт. юлташсен очеркӗсемпе корреспонденцийӗсем пулаҫҫӗ.

Выльӑх-чӗлӗхӗн продуктивноҫӗ ӳсет

Ишлей районӗнчи уйрӑм колхозсем кӑҫалхи ҫула обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе вӗҫлеҫҫӗ.

Район мӑйракаллӑ шултра выльӑх ӗрчетмелли ҫулталӑкри плана 87 процент сурӑхсем ӗрчетмелли плана 117 процент тултарнӑ. Сыснасен йышӗ планпа пӑхнинчен 50 процент ӳсрӗ. Вӑрман-Сӗктер ялсоветне кӗрекен «Париж Коммуни» колхозӑн план тӑрӑх мӑйракаллӑ шултра выльӑхсен шучӗ 35 пуҫ пулмалла пулнӑ, халӗ 42 пуҫ шутланать. Планпа пӑхнинчен сурӑхсем 12 пуҫ, сыснасем 34 пуҫ ытларах. «Коммунист», «Ырашпулӑх», Доронин ячӗпе тӑракан колхозсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Уйрӑм колхозсенче выльӑх-чӗрлӗхӗн продуктивноҫӗ планпа пӑхнинчен чылай пысӑкрах. Фермӑсенче ӗҫлекенсене, пурӗ 52 ҫынна, ҫӗнӗ закон тӑрӑх выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне ӳстернӗшӗн хушса тӳлеҫҫӗ. Микушкина юлташ («Самолет» колхоз) 6 ӗнерен 4882 литр сӗт суса илес вырӑнне, 5958 литр сӗт суса илнӗ. Ҫапла вара вӑл ҫӗнӗ закон тӑрӑх 83 литр сӗт илет. «Красная Чувашия» колхозри свинарка Енисеева юлташ планран ирттерсе 20 ҫӑвӑр пӑхса ҫитӗнтернӗ.

Ҫавӑншӑн вӑл 5 сысна ҫури илет. Калинин ячӗпе тӑракан колхозри чӑх-чӗп фермине ӗҫлекен Сенцова юлташ планран ирттерсе 2357 ҫӑмарта илнӗ. Ҫакӑншӑн ӑна колхоз правленийӗ 117 ҫӑмарта памалла тунӑ.

Паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлекен фермӑсем районра сахал мар. Вӗсем выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне ӳстерсе пырса, вӗсенчен ытларах тупӑш илессишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешеҫҫӗ.

Е. СМЕЛОВ.

Выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ

ШАХАСАН. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси, вӗсенчен ытларах продукци илесси выльӑхсене ӑнӑҫлӑн хӗл каҫарнинчен нумай килет. Ҫакна Ямашри «Ударник» колхозра ӑнланса илнӗ. Кунта выльӑхсене хӗл каҫарма лайӑх хатӗрленнӗ. Колхозӑн тӑватӑ ферма. Фермӑри выльӑхсем валли апат ҫителӗклӗ таранах хатӗрленӗ. 65 тонна силос хывнӑ, ытти апатсем те кирлӗ таранах пур.

Халӗ колхоз 30 пӑру вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите туса пӗтерчӗ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, ялхуҫалӑхӗпе промышленность пайӗсен — 0—88, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, дежурнӑйӑн — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5143 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательства и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557. Ф. 6. 58×84 п. л.